24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
МАЙ
5
ТУНТИКУН
104 (5819) №

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## БОЛЬШЕВИКЛА ПИЧЕТ

Ленинпа Сталин организациленĕ большевикла пичет ĕççыннисене политикăллă воспитани парас, вĕсене коммунизмăн пыракан кĕрешĕве мобилизацилес çĕрте пирĕн партин хăватлă хĕçпăшалĕ пулса тăрать. Хаçат вăл — коллективлă пропагандист тата коллективлă агитатор кăна мар, çавăн пекех тата коллективлă организатор та.

Халăхсен çулпуçĕ, юратнă тусĕ тата аслă учителĕ Сталин юлташ социализм строительствинче пичет мĕнтери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен, унăн организаторла ролĕ çинчен пĕр хутчен çеç мар калана. Иртнĕ юлашки çулсем хушшинче большевикла пичет ĕçĕнче пысăк событисем пулса иртрĕç. Партин Центральный Комитечĕ, Сталин юлташ хăй партин чи çивĕч, чи вăйлă хĕçпăшалне мĕнле çирĕплетсе пымаллине, унăн ĕçне çĕнĕ задачăсене май мĕнле урăхлатса çĕнетмеллине тепĕр хут кăтартса панă. Ку тĕлĕшпе юлашки çулталăк хушшинче ЦК ВКП(б) пире чылай пысăк документсем панă.

1940 çулта партин Центральный Комитечĕ отраслевой хаçатсемпе журналсем çинчен постановлени йышăннă. 1940 çулти августăн 20-мĕшĕнче ЦК ВКП(б) районсенчи хаçатсем çинчен постановлени йышăннă. Партин Центральный Комитечĕ вăл постановленире хаçатсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене уçса панă тата вăл çитменлĕхсене пĕтермелли майсене, районри хаçатсен малашнехи ĕç программине палăртса хăварнă.

ЦК ВКП(б) «Облаççенчи, крайсенчи тата республикăсенчи хаçатсен штатĕсем çинчен» йышăннă постановленипе пичет ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл постановлени авторсен активĕпе ĕçлес ыйтăва çивĕччĕн лартрĕ. Литература критикипе библиографи çинчен, фабрикăсемпе заводсенчи хаçатсем çинчен ЦК ВКП(б) йышăннă постановленисем хаçат-журналсен ĕçне тĕпренех лайăхлатма пулăшаççĕ. Çапла ĕнтĕ, çав чаплă документсене кăларса, парти совет пичетне черетри задачăсене пурнăçа кĕртме хĕçпăшалантарчĕ.

Пирĕн пичет, ВКП(б) Центральный Комитечĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Хаçатсем хăйсен ĕçне авторсене ытларах явăштарма, ыйтăва конкретлăрах çутатма тытăнчĕç, массăпа çыхăнса ĕçлесси аванланчĕ. Çакна районри хаçатсен, производствăна çывăх тăракан хаçатсен примерĕсем çинче лайăх курма пулать. Районри хаçатсем, хăйсен идейăллă тата политикăллă рольне ӳстернипе пĕрлех, массăсене организацилес енĕпе чылай паха опытсем пухрĕç, массăсен творчествăллă пуçарăвне организацилекен тата вĕсене воспитани паракан вăйлă хĕçпăшал пулса тăчĕç. Çавăн пекех, вырăнти стена хаçачĕсем те çак иртнĕ çулсем хушшинче хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç, вĕсен организаторла ролĕ, авторитечĕ ӳсрĕ. Стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăма, вăйлă тыпрулăн, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн пикенсе кĕрешме тытăнчĕç. Пуçламĕш парторганизацисем вырăнти пичет ĕçĕ çине ытларах çавăрăнса пăхма пуçларĕç.

Большевикла пичет хисеп енчен те, пахалăх тĕлĕшĕнчен те кашни çулах ӳссе пырать. Октябрьти революциччен пирĕн республикăра пĕр хаçат та тухман пулсан, халь республикăра 4 хаçат, районсенче 28 хаçат, заводсенче 4, колхозсенче икĕ многотиражка тухса тăраççĕ. Кусемсĕр пуçне 4 журнал тухать. Вĕсен çулталăкри тиражĕ 25 миллион экземпляртан иртет. Республикăра 3000 стена хаçачĕ тухса тăрать. Çак хаçатсем хăйсем тавра рабселькорсен вуншар пинлĕ çарне пĕрлештерсе тăраççĕ. Çакă ĕнтĕ ĕççыннисем çĕнсе илнĕ пысăк çитĕнӳсенчен пĕри пулса тăрать.

Большевикла пичет ӳснипе пĕрлех, ун умĕнче тăракан задачăсем те ӳсрĕç. Пичет кунĕнче эпир, ĕçри ситменлĕхсене палăртса, умра тăракан задачăсем çинчен тата тепĕр хут аса илмелле.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ: «парторганизацисен тимлĕхне промышленноçпа транспорт нушисемпе интересĕсемшĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшасси еннелле татăклăнах çавăрас пулать», терĕ.

Пичетĕн задачи те промышленноçпа транспорт нушисемшĕн тата интересĕсемшĕн ытларах тăрăшасси пулса тăрать. Çакă вăл экономика ыйтăвĕсем çинчен пичетре çутатассине тата пропагандăласси нихăçанхинчен çӳллĕ пусăма лартмаллине пĕлтерет. Хаçатăн вырăнти организацисемпе работникселе производство ĕçне лайăхлатма, хăйсен производствин ĕçне тĕплĕнрех пĕлме, производствăра тасалăхпа йĕркелĕх тума пулăшса тăмалла. Çаксене тăвас тесен, кашни хаçатăн хăйĕн халăх хуçалăхĕн пур отраçлисене те тĕплĕн пĕлмелле.

Марксизм-ленинизм теорийĕ çинчен пропагандăласси, партипе правительство решенийĕсене ăнлантарса парасси, вăл решенисене пурнăçа кĕртес ĕçе ĕççыннисене мобилизацилесси кашни хаçатшăн ответлă та хисеплĕ ĕç пулса тăрать. Комсомольски районри «Октябрь ялавĕ» хаçатра ĕçлекенсем çакна тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыраймаççĕха. Вăл хаçатăн кашни номерĕнчех йăнăшсем тĕл пулаççĕ, хаçат работникĕсем район экономикине вĕренмеççĕ, район умĕнче тăракан ыйтусене хаçат урлă çивĕччĕн лартаймаççĕ. Çавăн пекех Тăвай районĕнчи «Большевикла колхозшăн», Ишлей районĕнчи «Колхозник хаçачĕ», Çĕмĕрле районĕнчи «Социализмлă ĕç» хаçатсем те хăйсен ĕçне çителĕксĕр çĕнетсе урăхлатаççĕ. Вĕсем партиллĕ пропаганда тата парти пурнăçĕн ыйтăвĕсене кирлĕ пек çутатса пыраймаççĕ. «Колхоз пурнăçĕ» (Йĕпреç р.), «Хĕрлĕ Октябрь» (Октябрьски район) хаçатсен редакцийĕнсем халĕ те хаçата хăйсен сотрудникĕсен материалĕсемпе тултараççĕ. Авторсен коллективĕпе сахал ĕçлеççĕ.

Çак фактсем ĕнтĕ районри хаçатсем чылайĕшĕ ЦК ВКП(б) районри хаçатсем çинчен йышăннă постановленине пурнăçа çителĕксĕр кĕртсе пыни çинчен калаççĕ.

Кăçал большевикла пичет кунĕ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешес çĕрте пичет ролне ӳстерес лозунгпа иртет. Пичет кунĕнче хаçат редакцийĕсемпе редколлегисем партипе совет активĕ, вулакансем умĕнче отчетсем туса параççĕ. Хаçатсем хăйсен ĕçĕсем çинчен вулакансене каласа пани республикăри, районри тата вырăнти стена хаçачĕсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене тĕплĕн уçса пама, хаçат ĕçне çĕнĕрен çĕршер çын явăштарма, хаçатсемпе массăсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме пулăшĕ. Редакцисем тăвакан отчет—вăл аппаратра ĕçлекенсен отчечĕ çеç мар, вăл рабселькорсен, редакци тулашĕнчи авторсен коллективĕн отчечĕ пулса тăрать. Пичет кунне палăр туса иртерни вырăнти стена хаçачĕсене, унта ĕçлекенсен кадрне çирĕплетме пулăшмалла.

Большевикла пичет умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Вăл задачăсене партин XVIII конференцийĕ палăртса хăварчĕ. Умра тăракан задачăсене пурнăçа ăнăçлăн кĕртес тесен, пичет работникĕсем хăйсем культурăллă, марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланнă çынсем пулмалла. Пичетĕн чи пысăк задачисенчен пĕри — марксизм-ленинизм теорине пропагандăласси, пирĕн кадресен теорипе политикăллă пĕлĕвне ӳстерме пулăшса пырасси пулать. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пирĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлес пулать.

Ленин—Сталин партийĕ пăхса ӳстернĕ большевикла пичет работникĕсем, ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата Сталин юлташ ертсе пынипе, хăйсем умĕнче тăракан ответлă задачăсене малашне те чыслăн пурнăçа кĕртсе пырĕç.

## Республика уйхирĕсенче

ЭЛĔК, майăн 4-мĕш. (Телефонпа). Майăн 3-мĕшĕнче Кайри Хирлепри «Пионер», Кармалти «Комсомолец», Мăн Вылăри «Заря», Шарыпкăри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çурхи суха ĕçне тытăнчĕç. Паян районри чылай колхозсем сухана тухрĕç. Колхозсен уйхирĕсенче çурхи ĕçсем анлăн сарăлса пыраççĕ. Паянхи кун тĕлне районĕпе 1.412 гектар клевер акнă.

**ВОЛКОВ.**
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ

ЕЛЧĔК, майăн 4-мĕш. (Телефон тăрăх). 54 колхозран сухана 36 колхоз тухнă. Ĕнер уйрăм участоксене суйласа илсе акма тытăннă. Тракторсемпе ĕçлеме çĕр типсе çитмен-ха. Кĕрхи тырă çине клевер акса çитернĕ. Калчасене апат парас ĕç сарăлсах пырать.

**ПЕТРОВ.**
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

КАЛИНИНО, майăн 4-мĕш. (Телефон тăрăх). Сухана пурĕ 13 колхозра тухнă. «Трактор», «Искра» колхозсем тата Калинино ялĕнчи колхоз суха тăваççĕ. Буденный ячĕпе тăракан тата «Çутталла» колхозсенче сӳреleççĕ.

Кĕрхи тырă çине клевер акас плана тултарнă.

442 гектар çинче калчасене апат панă.

Майăн 5-мĕшĕнче Кӳлхĕрринчи «Трактор» колхоз утăлăх вика акма тухать.

**Агроном ЕГОРОВ.**

ЕТĔРНЕ, майăн 4-мĕш. (Телефон тăрăх). Ĕнерхи куна пĕтĕмпе 1400 гектар клевер акнă, 600 гектар çинче калчасене апат панă тата 1165 центнер вăрлăх яровизациленĕ.

Етĕрне хулинчи «17-й партсъезд» колхоз кĕрхи тырăсене сӳреleме тытăнчĕ.

Ĕнер Полянкăри, Егоркинăри, Пĕрсырланри колхозсем çурхи сухана тухрĕç, викка акма тытăнчĕç.

**А. ЧЕХОНИН.**

ШАМАРША, майăн 4-мĕш. (Телефон тăрăх). Вунпĕр бригадăран ултă бригада суха сухалама тытăннă. 58 гектар сухаланă. Суха пахалăхĕ лайăх.

9 бригадăн будкăсем пур. Трактористсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе туса пыма район центрĕнчен сынсем тухса кайнă.

Майăн 5-мĕшĕнче кăшпĕр бригадăсенче çурхи тырăсене акма пуçласçĕ.

Трактористсене пулăшас ĕçре пĕр çитменлĕх пур: чылай колхозсем тракторнăй бригадăсем патне заправка тума кирлĕ урапасем илсе пымаççĕ.

Горючисемпе сĕрмелли япаласем çителĕклĕ.

**КУРМАНИН.**
МТС директорĕ.

### Сухана тухнă

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майăн 3-мĕш (Телефон тăрăх). Майăн 2-мĕшĕнче сухана 4 колхоз тухнă. Чичкан ялсоветĕнчи «Заветы Ильича» колхоз 6 гектар, Сӳрпей ялсоветĕнчи «Культура» колхоз—8 гектар сухаланă. «Коммунар» колхоз çĕртме сухине 2 гектар тепĕр хут сухаланă, 10 гектар сӳреленĕ.

Паян виçĕ колхоз сӳре сӳреleме тухнă.

**К. БУРЧЕНКОВА.**

### Агротехникăна пăсаççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ, майăн 4-мĕш. (Телефон тăрăх). Майăн 2-мĕш тĕлне районĕпе акана 43 колхозран 38 колхоз тухнă. Пĕтĕмпе 897 гектар сухаланă. Çичĕ колхозра 87 гектар сĕлĕпе тула акнă.

Районĕпе клевер 1043 гектар, люцерна 88 гектар, пурĕ — 1131 гектар акнă. Вăл ака планне 71 процент тултарни пулать.

Акара чи малти ретре «Красный луч» колхоз пырать. Вăл колхозра пурĕ 170 гектар сухаланă, 32 гектар акнă. «Красное Именево» колхоз пурĕ 60 гектар сухаланă, 36 гектар акнă; «Путь социализма» колхоз 90 гектар сухаланă, 40 гектар акнă; Буденный ячĕпе тăракан колхоз 75 гектар сухаланă, 35 гектар акнă.

Акан малтанхи кунĕсенчех кăшпĕр колхозсенче агротехника йĕркисене пăснисем пулнă. «Большевик» колхозра 4 гектар лаптăкĕш çине викăпа сĕлĕ хутăш алăпа акса хăварнă.

**И. АНТОНОВ.**

### Трактор сем ĕçсĕр тăраççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майăн 4-мĕш. (Телефон тăрăх). Районри 51 колхозран акана 47 колхоз тухнă: çурхи суха сухалаççĕ., кĕрхи çĕртме тунă пусăсене сӳреleççĕ. Майăн 3-мĕш тĕлне 105 гектар сухаланă, 292 гектар сӳреленĕ.

Тĕттырă культурисене паянхи кунчен 25 гектар акнă. «Сормово» колхозра 5 гектар тулă акнă.

«Победа» колхозра 13 гектар утăлăх вика акнă. Çакăн пекех «Красный Октябрь» колхозра та вика акнă.

Трактор семпе пур çĕрте те ĕçлеме пулать, çĕр типсе çитнĕ. Анчах 11 тракторнăй бригадăран халĕ 2 бригада кăна ĕçлет, ыттисем автол çук пирки ĕçлемесĕр тăраççĕ. Автол илме Канаша кайнă.

**Агроном Б. МУСТАФЬЕВ.**

Большевикла пичет кунĕ тĕлне. В. И. ЛĔНИН, И. В. СТАЛИН тата В. М. МОЛОТОВ „Правда“ хаçат редакцинче (1917 çул). П. Васильев художник ӳкернĕ. (Фото-клише ТАСС).

## Тăван çĕршыв хăрушсăрлăхĕн хуралĕнче

### *Киеври демонстрацире 500 пин çын пулнă*

КИЕВ, майăн 1-мĕш. (ТАСС). Украина столици ялавсемпе тата транспарантсемпе илемленнĕ.

Крещатик патĕнче, парадсемпе демонстрацисем ирттермелли традицилле выран пулса тăнă çĕрте, инçете, Днепр патне çитиех, танксем йĕркеленсе тăнă.

10 сехет. Т. Г. Шевченко ячĕпе тăракан бульвар енчен Киев Уйрăм Çар Округĕнчи войскăсен командующийĕ Совет Союзĕн Геройĕ Кирпонос пырать. Войскăсем умĕпе тухса, вăл вĕсене праздник ячĕпе — Майăн 1-мĕш ячĕпе сывлăх сунса саламлать.

Правительство трибуни çине Хрущев, Корниец, Бурмистенко, Коротченко, Гречуха юлташсем, ЦК КП(б)У, УССР правительствин членĕсем, партипе совет организацийĕсен обласрисем тата хулари организацийĕсен руководителĕсем улăхаççĕ, вĕсене ĕççыннисем ăшшăн саламласа кĕтсе илеççĕ. Хăнасем валли тунă трибунăсем çинче — Украина столицинчи хисеплĕ çынсем, предприятисенчи стахановецсем, наука, искусство, литература представителĕсем.

Савăнăçлă марш кĕввипе войскăсем тапранса тухаççĕ. Чи малтан шествине Киеври училищесенчи курсантсем —пехотăн, артиллерин, бронетанковăй чаççен пулас лейтенанчĕсем, пулас политработниксемпе врачсем пуçлаççĕ.

Днепр флотилийĕн краснофлотецĕсем вымпелсем айне тăрса тухнă.

Крещатика артиллери шавласа пырса кĕрет. Моторизованнăй пехота курăнать.

Трибуна умĕпе хăвăрт сӳрекен танксем иртсе каяççĕ, вĕсем хыççăн сухопутнăй крейсерсем йышлăн иртеççĕ, юлашкинчен, орудисемпе тата пуленетсемпе хĕçпăшалланнă танксем — крепоççем.

Питĕ аялтан хăвăрт вĕçекен истребительсем ыткăнаççĕ. Летчиксене начар çанталăк та чăрмантараймасть. Мастер пилотсене халăх алă çупса саламлать.

Парад вĕçленет. Вăл совет хĕçпăшалĕн калама çук пысăк хăватне, Украина халăхĕ кирек хăш самантра та социализмла аслă тăван çĕршыва сыхлама тăма хатĕррине кăтартса панă.

Демонстраци пуçланать.

Крещатика Украина столицинчи сакăр районри ĕççыннисен колоннисем пырса кĕреççĕ. ЦК ВКП(б) Политбюро членĕсемпе Совет Союз Геройĕсен портречĕсене, илемлĕ паннона, промышленноçпа ялхуçалăхĕнчи ситĕнӳсем çинчен калакан паннона, савăнăçлăн йăтса пыраççĕ вĕсем.

Украина горецĕсем — гуцулсем, нумай çулсем хушши пансен пусмăрĕнче тертленсе пурăннăскерсем, илемлĕ тумланнă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем Совет Союзĕнчи халăхсен тăванлă семьинче èмĕрлĕхех телей тупнă.

УССР наукăсен Академийĕн работникĕсем, государствăн Киеври университетĕнчи студентсем Сталинла преми лауреачĕсен портречĕсене йăтса пыраççĕ.

Трибуна умĕнчи площадь пĕлмелле мар пулса тăрать. Демонстрантсен аллисенче — тулăн ылттăн пек пиншер пучахĕсем. Вĕсем чăннипех колхоз уйхирĕсене кăтартса параççĕ.

Киевра Майăн 1-мĕшĕнчи демонстрацире 500 пин ĕççынни пулнă, вĕсем советăн çулăмлă патриотизмне, хăйсен хĕрӳллĕн юратакан социализмлă тăван çĕршывĕн хăватне тата ытларах вăйлатас ирĕк-камăла кăтартса панă.

## Ленин хулинче

### *Демонстрацире миллион та 400 пин çын пулнă*

ЛЕНИНГРАД, майăн 1-мĕш. (ТАСС). Ленин хули Майăн пĕрремĕшне савăнăçлă юрăсен шавĕпе, вĕçĕмсĕр нумай хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшнипе кĕтсе илнĕ.

Урицкий ячĕпе тăракан историллĕ площадьре çар Академийĕсем, училищесем, гарнизон чаçĕсем парада хатĕрленсе тăнă.

Площаде пырса кĕрекен урамсенче хĕрушă та боевой машинăсем, инçете перекен йывăр орудисем йĕркерен вырнаçса тăнă. Войскăсем хурçă пек колоннăсемпе тăраççĕ.

Трибунăсем çинче — хулари ятлă çынсем, ĕçпе наука çыннисем. Ленинградри большевиксен руководителĕ аслă Сталинăн шанчăклă соратникĕ — А. А. Жданов юлташ центральнăй трибуна çине хăпарсан, ăна хĕрӳллĕн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Ленинград çар округĕнчи войскăсен командующийĕ генерал-лейтенант Попов войскăсем умĕпе туха вĕсене саламлать. Ăна ответлесе хăватлăн «урра» кăшкăраççĕ.

Чи малтан, марш кĕввипе, праздник тумĕпе капăрланнă трибунăсем умĕпе Буденный ячĕпе тăракан военно-электротехнически Академи слушателĕсем иртеççĕ. Вĕсем хыççăн Л. М. Каганович ячĕпе тăракан военно-транспортнăй Академи тата С. М. Киров ячĕпе тăракан военно-медицински Академи слушателĕсем иртеççĕ.

Унтан площаде тинĕс-çар вĕренӳ заведенийĕсенчи курсантсемпе командирсем пырса кĕреççĕ.

Кăштах лăпланнă пек пулнă хыççăн площаде вĕрçĕнĕ грузовой автомобильсен колоннисем пырса кĕреççĕ. Малти ретри машинăсем çинче — чапа тухнă, Ленин орденĕпе наградăланă Н-жи стрелковăй дивизин боевой полкĕсен ялавĕсем. Унăн боецĕсем пурте чи вĕрçĕнĕ йышши хĕçпăшалпа хĕçпăшаллаççĕ.

Танксене хирĕç кĕрешекен артиллерин нумай йышлă подразделенийĕсем калама çук хăвăрттăн иртеççĕ.

Чылай вăхăт хушши иртеççĕ противовоздушнăй оборона чаçĕсем. Çурçĕрхĕвеланăçĕнчи чикĕсене, Ленин хулине кунĕ-çĕрĕн хуралласа тăраççĕ сывлăшри çивĕч куçлă часовойсем. Шăпăн иртеççĕ гигантла прожекторсем...

Площаде ĕç çарĕ, чĕрĕ, Ленин хулин мухтавлăхĕ пырса кĕрет.

Колоннăсем умĕнче — Ленинăн тата Сталинăн ялавсемпе, чĕрĕ чечексемпе илемлетнĕ калама çук пысăк статуйисем. Ленинградри большевиксен руководителĕн Жданов юлташăн портречĕ.

Кировецсен юратнă Сталина тата унăн боевой соратникĕсене чысласа калана савăнăçлă сăмахĕсем илтĕнеççĕ.

Ленинградри нумай предприятисен коллективĕсем халăх савăнăçлăн уяв иртнĕрекен площаде çĕнĕ çитĕнӳсем туни çинчен рапортсемпе пынă. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн историллĕ решенийĕсемпе хавхаланса çĕкленсе, вĕсем ритмично, кашни кунхи, декадăри тата уйăхри графика тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Ленинградецсем пĕрремĕш кварталти тата апрель уйăхĕнчи производствăлла программăна ăнăçлăн тултарнă.

Фабрикăсемпе заводсен коллективĕсемпе пĕрле наука, искусство работникĕсем, ученăйсем, сцена, кино мастерĕсем, писательсем, художниксем пыраççĕ, вĕсем хăйсем хушшинчен Сталинла преми лауреачĕсене вуншарăн воспитани парса ӳстернĕ.

Майăн 1-мĕшĕнче Ленин хулинчи демонстрацире, Ленин—Сталин партийĕн ялавĕ айĕнче, 1.400 пин ĕççынни пулнă.

Ленин хулинче Майăн пĕрремĕшĕнче пулнă шестви совет халăхĕн хăватне уçăн кăтартакан демонстраци пулса тăнă.

## Ирĕклĕ пĕрремĕш маевка

### *Таллинри демонстрацине 75 пин çын ытла хутшăннă*

ТАЛЛИН, майăн 1-мĕш. (ТАСС). Эстони республикинчи ĕççыннисем пая ирĕклĕ пĕрремĕш маевкăна тухнă.

Советлă Эстони столици нихăçа пулман пекех капăр тумланнă.

Ирхине 10 сехет. Çĕнтерӳ площадĕ че туса лартнă трибуна çине республ ликăри парти, совет тата комсомол ор ганизацийĕсен руководителĕсем, ССС тата ЭССР Верховный Совечĕсен депу тачĕсем хăпараççĕ.

Площадьре парад пуçлама хатĕ войскăсем стройпа тăрса тухнă. Вĕсе умĕпе, краснофлотецсемпе красноарм ецсене сывлăх сунса, парада йы щăнаканĕ — Хĕрлĕ ялавлă Балт флочĕн командующийĕ вице-адмира Трибуц юлташ савăрăнса иртет.

Орудисенчен салют пани парад пу ланнине çинчен пĕлтерет. Балтикăр краснофлотецсен — линкорсемпе кре серсем çинче, миноносецсемпе подво нăй лодкăсем çинче сложнăй боево техникăна вĕренсе алла илнĕ хăюл моряксен маршĕ питех те чаплă ка тина пулнă.

Таллинри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарп Тинĕс-Çар Флочĕн — Эстони халăхн капитализмăн халăх курайман пу мăрĕнчен ирĕке кăларнă, империализ ла иккĕмĕш вăрçа хăрушлăхсенче сăлса хăварнă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çа Флочĕн мухтавлă воинĕсене пĕтĕм чĕ рен хавхаланса саламлаççĕ.

Кантăрла çитсен демонстраци пу ланать.

Советлă Эстони столичинчи ĕççынн сен колоннисем иртсе пыраççĕ. Вĕсе хушшинче — вагоновожатăйсен, чугу çул работникĕсен специальноçĕсене в ренсе алла илнĕ пирвайхи эстонкăсе

Колоннăсем хушшинче Сталин ю таша чысласа каланă саламлă сăмах сем янăраса илтĕнеççĕ, çакăн çине о ветлесе вара пĕтĕм хула тăрăх э тонла «элагу» тата вырăсла «урра кăшкăрни кĕрлесе каять.

Таллинра Майăн пĕрремĕш ячĕ пулнă демонстрацине 75 пин çын ы ла хутшăннă.

Çавăн пекех Тарту, Пярну хулисенч тата Эстони СС Республикинчи ыт нумай хуласемпе ялсенче те нума çынлă демонстрацисем пулса иртнĕ.

## Тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратнине кăтартса паракан демонстраци

Майăн пĕрремĕшĕнче Совет Союзĕ чи мĕнпур хуласемпе ялсенчи ĕççы нисем хăйсем коммунистла партин совет правительствине, аслă Сталин вĕçĕ-хĕррисĕр парăннине кăтартса п нă.

Харьковри демонстрацине 500 пи çын хутшăннă, Львовра — 300 пи çын ытла, Петрозаводскра — 35 пи çын, Сталинабадра — 60 пин çын ы ла, Ашхабадра — 90 пин çын ытл Алма-Атара — 130 пин çын, Фрунзе —50 пин çын, Ереванра — 135 пи çын, Тбилисире — 250 пин, Бакура 500 пин ытла, Минскра — 200 пи Куйбышевра — 150 пин ытла, Ирку скра — 85 пин, Ростовра — 225 пи Свердловскра — 180 пин ытла, Оре ра — 75 пин, Горькире — 300 пи ытла, Белостокра — 85 пин, Одесс ра — 350 пин, Выборгра — 40 пи Хабаровскра — 100 пин, Новосибирс ра — 150 пин, Владивостокра — 1 пин, Читара — 50 пин çын.

Халăхпа çар нимĕн уйăрăлми с хăнса пĕрлешнĕ. Ĕççыннисем стах новла ĕçри çĕнтерӳсене, çар хăй боевой пĕлӳлĕхне кăтартса панă. Х лăхăн çак тимĕр пек çирĕп утăмсе че хамăрăн тăван çĕршыва хӳтлем хамăрăн социализмлă тăван çĕршы хӳтлеме яланах хатĕр тăни курăнн (ТАСС).

# ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

## XVIII партконференци решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн

Партбюро секретарĕ Никифоров юлташ хăйĕн отчетлă докладне парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен, çав задачăсене пурнăçа кĕрес тĕлĕшпе отчетлă тапхăрта тунă ĕçсем çинчен каланипе пуçларĕ.

Канашри вагонсем юсакан заводри парторганизаци пысăк, вăл иртнĕ отчетлă тапхăрта татах чылай ӳснĕ: ВКП(б) членне 16 çын илнĕ. Партине илнисенĕн нумайĕшĕсем производствăри стахановецсем. Парторганизацинче халь 85 çын учетра тăрать.

Коммунистсен производствăри авангардлă ролĕ ӳсрĕ. Трухин, Дубовой ятсе пыракан вагонсем юсакан цех хăйĕн планне ăнăçлăн тултарса пырать. Нумай коммунистсем — стахановецсем. Коммунистсене, уйрăмăнах çамрăк коммунистсене, воспитани парас тĕлĕшпе партбюро лайăх ĕçленине кăтартас тĕлĕшпе докладчик сахал мар нифрăсем илсе кăтартрĕ. Лекцисем 26 хут, консультацисем 9 хут иртнĕ. ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренекенсемпе консультацисене коммунистсем питĕ сахал çӳренĕ, кружоксен занятийĕсем йĕркеллĕ пулса пыман.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференци решенийĕсем промышленноспа транспорт предприятисенчи парторганизацисемшĕн ĕç программи пулса тăрăççĕ. Мĕнле пурнăçа кĕртсе пыратъ вăл решенисене вагонсем юсакан заводри парторганизаци? Партбюро секретарĕ отчетра график, штурмовщина, браксем, технологи, тасалăх, продукци хакĕ çинчен те сăмах пуçларĕ. Пăлах пĕр ыйтăва та тĕплĕн çутатса памарĕ.

Докладчике пренире тухса калаканăм нумай пулăшрĕç. Вĕсем партбюро та пĕтĕм парторганизаци ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене уçса палартрĕç, ĕçе майлатас тĕлĕшпе паха та кирлĕ сĕвĕсем пачĕç.

— Завод плана тултарайманнишĕн,— терĕ Знаменский юлташ,—яланах снабжени отделне айăпласçĕ. Эпир пирĕн çитменлĕхсене кăтартса панишĕн хиçместпĕр. Анчах план тулманшăн тĕплĕх снабжени отделне айăпа хурать тĕрĕс мар. Пирĕн заводра материалсемпе тирпейсĕр усă курасçĕ. Цехсенче болтсем, детальсем ăçта кирлĕ пулса тухăнах выртаççĕ, материалсене çеммеççĕ, заводра материалсене ухмах складсем çук. Завод руководителĕсем умне склад тăвас ыйтăва темиçе хут партăм, вĕсем яланах «укçа çук» терĕме пăхаççĕ. Çав вăхăтрах вагонсем простой тунăшăн пиншер тенкĕ тӳлеççĕ. Нумай чухне простойсем склад хуçалăхĕ йĕркесĕр пирки пулаççĕ. Çак ыйтусем партбюрошăн паллă пулнă, анчах партбюро вĕсемпе интересленмен.

Материалсем тăратас тата склад хуçалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе Лисицин юлташ лайăх сĕнӳсем пачĕ. Хальхи вăхăтра снабжени тата транспорт отделĕсем пур. Кашни отделăн начальник пур. Вĕсем пĕр-пĕрне пăхăнман çынсем. Тĕрĕссипе илсен, икĕ отделĕн те пĕр ĕç—завода материалсем тăратасси. Апла пулсан, вĕсене пĕр отдела пĕрлештерни усăллăрах пулĕччĕ. Заводра кладовщиксене ĕç укçи тӳлес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулнă. Пысăк складсенче ĕçлекенсем уйăхра 250 тенкĕ, цехсенчи кладовойсенче ĕçлекенсем 350 тенкĕ илеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ кладовщиксем пĕрмаях улшăнса тăраççĕ.

Пренире тухса калакан юлташсенчен нумайĕшĕсем штурмовщина, тирпейсĕрлĕхпе тасамарлăха пĕтерес тĕлĕшпе парторганизаци çителĕксĕр ĕçлени çинче чарăнса тăчĕç. Мартăн 15-мĕшĕнче завода график тăрăх ĕçлесси çине куçарнă. Пуçламĕшĕнчех графика пĕр цех та пăхăнса пырайман. Кун хыççăн тепĕр çĕнĕ график тунă. Ăна апрелĕн 1-мĕшĕнче ĕçе кĕртнĕ. Вăл графика та халĕ нихăш цех та кирлĕ пек пурнăçа кĕртеймест.

Конференци хыççăнах тасалăх тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăннăччĕ. Цехсене тасатнă, станоксемпе оборудованисене тирпейлĕрех тыткалама пуçланă. Чылай цехсенче халĕ каллех малтанхи пек пула пуçланă. Мĕншĕн тесен кунти парторганизаци, коммунистсем тата руководительсем тирпейлĕхпе тасалăхшăн кĕрешесси кулленхи ĕç пулса тăнине манса кайнă.

Чылай коммунистсем партбюрона тата унăн секретарĕне СССР Верховный Совет Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче каларнă Указа пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн хытă критиклерĕç.

Технологи дисциплинине пăснисем нумай пулнă, брак тата простой хисепĕ те пысăк-ха. Партбюро комсомол, профсоюз организацисен ĕçĕсемпе те сахал интересленнĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕ партбюро ĕçне вăтам тесе хакларĕ. Партбюро составне: Г. Н. Сорокин, А. Н. Никифоров, В. Г. Поздняков, Н. Н. Никитин, И. А. Знаменский, Г. Е. Шевелков, И. А. Дубовой юлташсене суйласа хăварчĕ. Партбюро секретарĕ пулма Г. Н. Сорокин юлташа суйланă.

Отчетпа суйлав пухăвĕнче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсем И. Чарыков тата Крылов юлташсем пулчĕç.

**М. ТИТОВ.**
**КАНАШ** (Хамăр корр.).

## Суйлавсен итогĕсем

ИЕПРЕÇ. Районра пуçламĕш парторганизацисенчи отчетпа суйлав пухăвĕсем апрелĕн 10—22-мĕшĕнче пулса иртрĕç.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче районри коммунистсен пĕтĕм хисепĕнчен 89,5 проценчĕ пулнă. Пухусене пынă коммунистсенчен 73,7 проценчĕ пуçламĕш парторганизацисен отчетлă доклачĕсем тăрăх пренире тухса каланă.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем районри парторганизаци ВКП(б) XVIII съезчĕн тата XVIII конференцийĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслес паллăпа иртрĕç.

Коммунистсем пухусенче критикăпа самокритикăна анлăн сарса яниппе пуçламĕш парторганизацисен отчетлă тапхăрти ĕçĕсем çинчен тĕплĕн сӳтсе-яврĕç. 21 пуçламĕш парторганизацисенчен 18-шĕн ĕçĕсене çителĕклĕ, 3-шĕнне çителĕксĕр тесе йышăннă.

Эпеçри, «Красный металлист» колхози тата райуполнаркомзагри пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсене çителĕксĕр тесе йышăннă. Мĕншĕн çителĕксĕр тесе хаклана-ха çак пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсене? Эпеçри пуçламĕш парторганизаци тата унăн секретарĕ Петухова юлташ партиллĕ-политикăлла тата хуçалăхлă ĕçсене ертсе пыман. Коммунистсен пухăвĕсем плансăр тата ячĕшĕн кăна пулса иртнĕ, пухусенче коммунистсене политикăллă воспитани парас, партине провительство решенийĕсене вăхăтра пурнăçлас, колхоз производствинчи ĕçсене лайăхлатас ыйтусене çителĕксĕр сӳтсе-явнă, йышăннă решенисем хут çинче çеç юлнă. Çаксене пула ĕнтĕ организацинчи уйрăм коммунистсем: Шатулкин, Васильева, Трофеев парти пурнăçĕнчен уйăрăлса кая пуçланă, вĕсем парти историне те вĕренмеççĕ.

«Красный металлист» колхозри тата райуполнаркомзагри пуçламĕш парторганизацисем те çавнашкалах. Райуполнаркомзагри пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Федоров юлташ партиллĕ ĕçпе сахал интересленнĕ, çавна пула вăл пухусене нихăçан та вăхăтра ирттермен, плансăр ĕçленĕ, отчетпа учет ĕçĕ начар, парти ретне çĕнĕ членсем илес тата коммунистсене политикăллă вопитани парас ĕçсем çителĕксĕр.

Пуçламĕш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем ВКП(б) райкомĕ, уйрăмăнах ВКП(б) райкомĕн инструкторĕсемпе пропагандисчĕсем пуçламĕш парторганизацисене ĕçре çителĕксĕр пулăшса пынине палăртрĕç. ВКП(б) райкомĕн промышленность енĕпе ĕçлекен инструкторĕ Е. Трофимова юлташ предприятисенчи пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсене ВКП(б) XVIII конференцийĕн решенийĕсем тăрăх лайăхлатса çĕнетме сахал пулăшнă. Вăл предприятисене пырсан та парти ĕçĕ çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхнă, парти ĕçĕпе нимĕнле кăтартусемех те парса хăварман. ВКП(б) райкомĕн Буинскри хăма çуракан заводри пуçламĕш парторганизаци çумне çирĕплетнĕ пропагандисчĕ Прокопьев юлташ парти историне вĕренмелли кружокăн занятине хĕл каçиччен пĕрре те ирттермен.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене пурĕ 13 çынна пĕрремĕш хут суйланă.

**Ф. ЗАХАРОВ.**

## Актив экономика ыйтăвĕсене вĕренет

ВКП(б) Елчĕк райкомĕн парткабинечĕ активăн экономикăллă образованине ӳстерме каласçăсем ирттерме тытăнчĕ. Пĕрремĕш каласӳра Дозоров юлташ (СССР Финанс Халăх Комиссариачĕн Елчĕк районĕнчи контролер-ревизорĕ) баланс çинчен ăнлантарса пачĕ. Баланс çинчен вĕренме районри активран 30 çын пынă. Каласу вăхăтĕнче занятине пынисем 15—20 ыйту парса тĕплĕн ыйтса пĕлчĕç.

Каласу мĕнле иртни çинчен, пурин шухăшне те палăртса, Муратов юлташ:

— Каласу интереслă пулчĕ, вăхăт иртни те сисĕнмерĕ, — тесе каларĕ.

Çавăн пекех районри актив агротехникăна вĕренет. Агротехникăна вĕренекенсене пулăшма парткабинетра агрономсем уйăхра виçĕ хут каласусем ирттереççĕ. Çак кунсенче çураки вăхăтĕнче лашасене пăхасси тата сеялкăсемпе ĕçлесси çинчен каласусем пулмалла.

Анчах партине совет активĕн вĕренĕвĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Чылайĕшĕ, сăмахран, Д. Носов тата Марков юлташсем, парткабинетри докладсемпе каласусене пĕртте çӳремеççĕ. Ку çитменлĕхе хăвăртрах пĕтермелле.

**А. РОМАНОВ.**

## Вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем

Хутарти (Çĕмĕрле р.) вăтам шкулта кăçалхи вĕренӳ çулĕн виççĕмĕш чĕрĕкĕнче вĕренӳре ĕлкĕрсе пыракансен хисепĕ 67,3 процент кăна пулчĕ. Уйрăмăнах вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман ачасем аслă классенче нумай.

Вĕренекенсем пуринчен ытла вырăс чĕлхи тата математика предмечĕсемпе «плохо» паллăсем илеççĕ.

Ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пыманни нагляднăй пособисемпе усă курса вĕрентменнинчен, литература çителĕксĕрринчен, шкул библиотеки йĕркеллĕ ĕçлеменнинчен тата учительсем пĕр-пĕринпе таччăн сыхăнса ĕçлеменнинчен килет.

Çав çитменлĕхсене пĕтерессишĕн, вĕренӳ пахалăхне ӳстерессишĕн кĕрешӳ пуçарса ямалла.

**Г. П.**

## Контроль çуккине пула

Иртнĕ çулта Çĕрпӳ МТ Станцийĕнче тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене кирлĕ пек пăхса усраман. Çакна пула вара виçĕ трактор çу каçичченех сĕр ларнă, горючисене те ытлашши май расходланă, машина пайĕсемпе лсе усă курман. Çапла майпа МТС ултăлăк хушшинче 137 пин тенкĕ тăк курнă, производствăллă плана 70 роцент ытларах çеç тултарнă.

Çунта ĕçлекен коммунистсен отчетпа йлав пухăвĕ паян-ыран уй ĕçĕсем çланас чухне—апрелĕн 28-мĕшĕнче лса иртрĕ. Пухура çакă палăрчĕ: С çуракине тухма пур ĕççĕсете туса çитермен, апрелĕн мĕш тĕлне тата 6 трактор юсамасăр нă, бензинпа краççин турттарса тухлли пичкесем çурри те юрăхлă мар. тре, бак, шприц тата ыттисем те тмеççĕ.

ВКП(б) райком бюровĕн тата райсот исполком президиумĕн ларăвĕсенбудкăсем тăвас ыйтăва сӳтсе-явнă, С директорне пур бригадăсем валте будкăсем туса хатĕрлеме хушнă. чах районри организацисем хăйсен шăннă решенисем мĕнле пурнăçланне тĕрĕслеменнине пула, МТС директорĕ пулнă Ельмаков вăл решенине пурнăçа кĕртмен, пĕр бригада лли те будкăсем туса хатĕрлемен. МТС директорĕ пулнă Ельмаков Чăш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне та районри организацисене суя свенисемпе улталанă. МТ Станцинчи çламĕш парторганизаци директорăн тменлĕхĕсене вăхăтра уçса палăрайман, партин Çĕрпӳ райкомĕ те вăхăтра кирлĕ мерăсем йышăнман.

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Шишкин юлташ хăйĕн отчетлă докладĕнче МТ Станцинчи партиллĕ-массăллă ĕç çинчен нимех те каламарĕ, мĕншĕн тесен пуçламĕш парторганизаци партиллĕ-массăллă ĕç енĕпе те питĕ çителĕксĕр ĕçленĕ.

МТС, пĕтĕмĕшпе илсен, начар ĕçленĕ пулсан та, кунта кăтартуллă ĕçлекенсем те çук мар. Иртнĕ çулти производствăллă плана Черняев юлташ бригади 190 процент, Мясцов юлташ бригади 112 процент, Картошкинпа Орлов юлташсен бригадисем 100 процент ытла тултарнă. Анчах лайăх ĕçлекенсен опычĕсене пур бригадăсене те сарса пыман. Тĕрĕссипе илсен, социализмлă ăмăртăва кăçал та пуçарман-ха, трактористсем хушшинче ăмăрту договорĕсем туман.

Бригадăсенче стена хаçачĕсем тухса тăмаççĕ, участоксенче ĕçлекен трактористсем валли хаçат-журналсем те çырăнса паман.

— Трактористсемпе комбайнерсем хушшинче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе туса пыни çук, çавăнпа та пирĕн ĕçсем начар пыраççĕ. Стахановецсемпе ударниксем хушшинче кирлĕ пек ĕçлемен. Малта пыракан юлташсене партине кĕме хатĕрленме пулăшман. Çулталăк хушшинче парти ретне 3 çын çеç илнĕ,—тет механик Коночкин юлташ.

Коммунистсем пуçламĕш парторганизаци ĕçне тĕплĕн сӳтсе-явса, унăн ĕçне çителĕксĕр, тесе хак пачĕç.

**Т. МАЙОРОВ**

## Учительсем тăрăшса вĕренеççĕ

Учительсем çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парас ответлă ĕçе туса пыраççĕ. Ку ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртнимá вĕсен хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстересех пымалла тата марксизм-ленинизм теорине вĕренĕçе алла илес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле.

Çак маларах каланисене асра тытса, красноармейскинчи вăтам шкулти учительсем парти историне тата марксизм-ленинизм классикĕсен уйрăм проведенийĕсене тăрăшса вĕренеççĕ. Икулти 19 учительрен паянхи куна 15 итель «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе тухнă. Хальхи вăхăтра вĕрен пурте первоисточниксем тăрăх вĕренеççĕ. 5 учитель ĕнтĕ К. Маркс «Капиталĕн» I томне вĕренме тытăнчĕç.

Харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене пушма, шкулти пуçламĕш парторганизацине местком пуçарнипе, лекцисемпе кладсем, юлташла каласусем тата нсультацисем ирттереççĕ. Çавăн пек учительсем ВКП(б) Красноармейски райкомĕн парткабинечĕ ирттерекен цисене те яланах сӳреççĕ.

Пирĕн коллективри уйрăм юлташе илсессĕн, учительница-отличница Еремеева юлташ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» 1939 çултах вĕренсе нă. Унтанпа вăл В. И. Ленинăн лай произведенийĕсене тĕплĕн вуласа вĕреннĕ, халĕ те вĕренсе пырать. Çавăн пекех А. Яковлев юлташ та парти историне учебник тăрăх иртнĕ çултах вĕренсе тухнă. Çав вăхăтранпа вăл Ленинпа Сталинăн произведенийĕсене вĕренсе пынă. Хальхи вăхăтра А. Яковлев юлташ К. Маркс «Капиталĕн» I томне вĕренет.

Пирĕн шкулти учительсем, хăйсем тăрăшса вĕреннĕ вăхăтрах, кӳршĕри шкулсенчи, уйрăмах Янкасри туллимар вăтам шкулти учительсене политикăллă самообразовани ĕçĕнче пулăшса пыраççĕ. Шкулти технически служащисене политикăллă ыйтусене ăнлантарса парас ĕçе те манса хăварман,—ку ĕçе учительница М. Мефодьева юлташ туса пырать.

Пирĕн шкулти заочник-учительсем те ăнăçлăн вĕренсе пыраççĕ. Кăçалхи çул П. Прокопьев юлташ Хусанти педагогика институтĕнчен, М. Журавлев юлташ чăвашсен педагогика институтĕнчен тата А. Михайлов юлташ учительсен институтĕнчен вĕренсе тухаççĕ. Ытти заочник-учительсем те тăрăшса вĕренсе пыраççĕ.

Çапла пикенсе вĕренсе пыни учительсен коллективне пĕтĕçтерет, ĕçри хастарлăха ӳстерет. Çакна май шкулта вĕрентӳ пахалăхĕ те ӳссе пырать.

**Г. ТОМАСОВ.**

# КОНСУЛЬТАЦИ

## Совет предприятийĕн тулли влаçлă руководителĕ

Пирĕн çĕршывра рабочи класс политикăллă влаçа кĕрешсе илнĕ хыççăнах единоначали ыйтăвĕ партине совет влаçĕ умне мĕнпур пысăккăшпине тухса тăчĕ. «Мĕнпур ĕççыннисене хуçалăхлă пĕр органа, сехет механизмĕ пек тĕрĕс ĕçлекен органа, пĕрлештерекен пĕрлĕхлĕх çук пулсан,—тесе вĕрентнĕ Ленин,—чугунçулсем те, транспорт та, пысăк машинăсем тата предприятисем тĕрĕс ĕçлеме пултараймаççĕ». (Соч., т. XXII, стр. 420). Единоначали, производствăна ертсе пырассин çак принципĕ, социализмăн политикăллă тата экономикăллă стройĕн тупсăмĕнчен тухса тăрать. Единоначали урлă рабочи класăн диктатури социализмлă производствăна ертсе пырать, социализмлă ĕçе организацилет тата ĕçре тимĕр пек çирĕп дисциплина пулмалла тăвать.

Социализмлă промышленноçа чи малта тăракан техникăпа пуянлатнă. Производство техники енĕпе пирĕн çĕршыв тĕнчере пĕрремĕш вырăнта тăрать. Совет предприятийĕсем питех те сложнăй механизмлă организмсем пулса тăраççĕ. Единоначалисĕр тата производствăри çирĕп дисциплинăсăр вĕсем ĕçлеме пултараймаççĕ: «...ĕç процесĕ, машинăллă шултра индустри сăнарĕ тăрăх организациленĕ ĕç процесĕ, ăнăçлă пултăр тесен, пĕрлĕхлĕ пĕр ирĕке **çирĕппĕн пăхăнни** питех те кирлĕ». (Ленин, т. XXII, стр. 462).

Совет руководителĕн единоначалийĕ кашни уйрăм çыннăн ĕçĕ обществăллă интерессене, коллектив интересĕсене, рабочисемпе хресченсен социализмлă государствин интересĕсене пăхăнмалла тумашкăн чи кирлĕ май пулса тăрать.

Социализмлă обществăра хуçалăхлă пурнăç государство планĕ тăрăх пулса пырать. ССР Союзăн план тăрăх пулса пыракан халăх хуçалăхĕн системинче социализмлă мĕнпур предприятисем социализмлă пысăк государствăн халăх хуçалăх организмĕн сыпăкĕсем пулса тăраççĕ. Пĕтĕм халăх хуçалăхĕн ĕçĕ ăнăçлă пулса пырасси кашни уйрăм предприяти мĕнле ĕçленинчен килет. Çавăнпа та социализм вăхăтĕнче производствăна тытса тăрас çĕрте единоначали пулни уйрăм предприятисене ертсе пыма кăна мар, тата пĕтĕм халăх хуçалăхĕн ĕçне йĕркеллĕ туса пыма та кирлĕ.

Единоначалине çирĕплетсе пыни хальхи вăхăтра, тĕнчери империализмлă иккĕмĕш вăрçă сарăлса пынă вăхăтра, уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хамăрăн тăван çĕршывăн хуçалăхлă хăватне тата çар хăватне вăйлатма, производство пысăккăшне хăвăрт ӳстерме предприятисенче большевикла йĕрке тăвас пулать,—ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, ĕç тухăçлăхне ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пымалла.

Единоначали çук çĕрте, тулли влаçлă хуçа çук çĕрте, унта—йĕркесĕрлĕх, ĕç дисциплини хавшалса пыни, ĕç тухăçлăхĕ кайра тăни, государство планне тултарса пыманни пулать.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче тата июлĕн 10-мĕшĕнче каларнă Указăсем совет предприятийĕнче директорăн рольне тата ответлăхне чылаях ӳстерчĕç, унăн положенине çирĕплетрĕç, производство дезорганизаторĕсем тĕлĕпше çирĕп мерăсем йышăнма директор аллине хăватлă средство пачĕç.

Совет государствинче хозяйственникăн ролĕ пит те пысăк. Сталин юлташ çапла кăтартса панă: «пирĕн условисенче хуçалăхăн руководителĕ пулăсси—вăл аслă чыслăха тата аслă хисеплĕхе тивĕçлĕ пулассине, рабочи класс енчен, совет халăхĕ енчен аслă шанăçа тивĕçлĕ пулассине пĕлтерет».

Совет çĕршывĕнче производство командирĕ пĕртте капиталистла фабрикăри командир пек мар. Капитализмлă çĕршывра вăл—капиталистăн приказчикĕ, унăн интересĕсем рабочисен интересĕсене хирĕçле: капиталистсем ăна рабочисене эксплоатацилесе ытларах услам сăптăрса илме лартнă. Пирĕн çĕршывра эксплоататорсем çук тата эксплоатациленекенсем те çук. Совет предприятинче хозяйственникăн тата коллективăн интересĕсем пĕрех, вăл — социализмлă государствăн хăватне тĕреклетесси.

Единоначальниксен партин политикăллă линине практикăра пурнăçа кĕртсе пыма, унăн ответлă пулма, ăна хӳтлеме, уншăн кĕрешме пултаракан çынсем пулмалла. Çакна тăвас тесен, вĕсен большевизма вĕренсе алла илмелле, производствăн хăйсем ертсе пыракан облаçĕнчи опыта тата пĕлӳсене вĕренсе алла илмелле.

Хуçалăх руководствин практики предприяти техникине, экономикине, финансне пĕлниччен пулса тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Сталин юлташ хуçалăх руководителĕсене çапла асăрхаттарать: «...заводăн, фабрикăн, шахтăн техникине, экономикине, финансне вĕренсе алла илмесессĕн — унсăрăн ăнăçлă ĕç пулмасть, единоначали пулмасть» («Вопросы ленинизма», изд. 10-э, стр. 444).

Совет хозяйственникĕн çирĕп ирĕклĕ, хастарлă командирăн пахалăхĕсем, хăйне пăхăнса тăракансенчен ыйтма, çавăн пекех хăй умне те çирĕп требованисем лартма, государство интересĕсене çивĕччĕн сыхлама пултаракан командирăн пахалăхĕсем пулмалла. Авторитетлă пулни—производство командирĕн ĕçĕнче çитĕнӳ тумалли чи кирлĕ условисенчен пĕри. Авторитета практикăллă ĕçре кĕрешсе илмелле. Совет руководителĕн уйăрăлми пахалăхĕ—вăл «массăсене вĕрентме кăна мар, тата массăсенчен вĕренме» (Сталин) пĕлни пулса тăрать. Массăсем мĕн каланине итлес пулать, мăнкăмăлланма юрамасть тата бюрократлă руководство рамкисенче массăсенчен пытанса ларма юрамасть.

Хăшпĕр руководительсем массăсемпе сыхăну тытма, вĕсемпе сывăх тăма «панибратла» пулмалла, тесе шутлаççĕ. Хăйне пăхăнса тăракансемпе сыхăну тытас çĕрте руководителĕн суя демократизмĕ — вăл руководитель начар пулнине кăтартаканни, работникăн начар енĕ кăна пулса тăрать.

Совет хозяйственникĕн государство умĕнче тӳрĕ кăмăллă пулмалла, çак пахалăхсăр вăл социализмлă государствăн ирĕкне пурнăçа кĕртме пултараймасть. Унăн государствăн тарçи, совет законне пуринчен малтан сыхлакан çын пулмалла, хăйĕн сотрудникĕсене совет законне, совет планне тарăннăн тата пĕр иккĕленмесĕр хисеплес туйăмпа, çирĕп дисциплинăллă пулас туйăмпа воспитани памалла.

Совет предприятийĕн директорĕ тулли влаçлă хуçа тата руководитель пулса тăрать, вăл предприятире ĕçсем мĕнле тăнишĕн тата унти йĕркелĕхшĕн пĕтĕмĕшпех ответлă. Директор хăй панă распоряжени тĕрĕс пулассишĕн кăна мар, çавăн пекех работник директор панă распоряжение вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçа кĕртессишĕн те ответлă пулса тăрать.

Завод директорĕ хăй е цех руководителĕ хăй, совет государствин законĕсемпе килĕшӳллĕн, наукăн даннăйĕсене тата производствăллă опыта никĕсе хурса, машинăсен ĕç режимне, производство технологийĕпе организацине тума тивĕçлĕ, вăл технологипе ĕç дисциплинине пăхăнса ĕçленине контроллесе тăма, ăна пăсакансем тĕлĕпше мерăсем йышăнма, туса кăларакан продукци пахалăхне сăнаса тăма тивĕçлĕ.

Социализмлă ĕç дисциплини ăнланарса панипе тата ирĕксĕрленипе те пулса пырать. Прогульщиксене, летунсене тата брак тăвакансене суд урлă ответ тыттарасси — директорсемпе учреждени начальникĕсен прави тата обязанноçĕ.

Пирĕн партин уставĕ тăрăх, ВКП(б) XVIII съезчĕ йышăннипе, производствăллă предприятисенчи пуçламĕш парторганизацисене администрацин ĕçĕсене контроль тăвас право панă. Вĕсен çак правăна пĕлсе, единоначалие пăсмасăр, ăна пур енчен те çирĕплетсе пурнăçа кĕртсе пымалла. Предприяти администрацине контроль туса тăрасси—вăл партипе правительство директивисене пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслессине, тата çав директивăсене тĕрĕссĕн пурнăçа кĕртсе пыма пулăшассине пĕлтерет.

Государствăн Л. М. Каганович ячĕпе тăракан 1-мĕш подшипниковăй заводри парторганизаци администрацине контроль туса тăнин опытне илсе кăтартни вырăнлă. 1940 çулти июльре шлифовальнăй цехсенче тата точнăй подшипник цехĕсенче алмазсем çуккине нумай участоксем ĕçлемесĕр тăнă. Заводри партком коммунистсемпе бесспартийнăй специалистсен группине алмаз хуçалăхĕ мĕнле тăнине тата алмаз вырăнне усă курмалли ялаласене тĕпчесе тупас ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслеме хушнă. Тĕрĕслӳ çакна палăртнă: хуçалăх руководителĕсем алмаз вырăнне урăх йышши ялаласемпе усă курас тĕлĕшпе ĕçлемен, изобретательсем алмаз вырăнне каякан ялаласем çинчен панă вуншар сĕнӳсене пурнăçа кĕртмен. Заводра пур пек алмазсене те сыхласа усрассине тата учета илессине организацилемен пулнă.

Алмаз вырăнне каякан урăх ялаласем тупса палăртас ĕçри ситменлĕхсем çинчен парти комитетĕнче сӳтсе-явнă хыççăн, завод руководителĕсем çав ситменлĕхсене пĕтерме мерăсем йышăннă. Часах заводра алмазсем вырăнне усă курмалли лайăх ялаласем тупăннă, шлифовальнăй станоксенчен 70 процентне çав ялаласемпе ĕçлеме куçарнă. Вара 1940 çулта алмаз малтанхи çулсенчинчен нумай сахалрах расходланă.

Анчах контроль тăвас тĕлĕшпе хăйсен задачисене пуçламĕш парторганизацисем пурте мар ăнланса илнĕ-ха. Партин хăшпĕр организацийĕсем хуçалăх руководствине хутшăнас çул çине тăрасçĕ, предприяти директорне тулли влаçлă руководитель пулма кансĕрлесçĕ, хăшпĕр чухне тата законсăр çул çине тăма та тĕртесçĕ. Сăмахран, партин Б.—Токмакски райкомĕн (Запорожье облаçĕ) секретарĕ Киров ячĕпе тăракан завод директорне СССР Судостроительнăй промышленность наркомĕн тĕрĕс распоряженинех пурнăçа кĕртме хушман.

Пирĕн социализмлă предприятисенчи партипе профсоюз организацисем çакна ăнланса илме тивĕçлĕ: директор предприятие хăй ертсе пырать, партипе профсоюз организацисен ăна ĕçре пулăшмалла, директор предприяти ĕçĕшĕн тата производствăри йĕркелĕхшĕн пĕтĕмĕшпех ответлă пулса тăрать. Сталин юлташ, промышленноçра единоначалине пурнăçа кĕртсе пырас ĕçри çитменлĕхсене критиклесе, партин XVI съездĕнче çапла каланă: «Пирĕн партипе профсоюз организацийĕсен, юлашкинчен, çакна ăнланса илес пулать: единоначалине пурнăçласа пымасăр тата ĕç мĕнле пынишĕн çирĕп ответлăх туса хумасăр эпир промышленноçа реконструкцилес задачăсене татса пама пултараймастпăр» («Вопросы ленинизма», изд. 10-е, стр. 404).

Партипе профсоюз организацийĕсен кашни рабочие директорăн, цех начальникĕн, мастерăн приказĕсемпе распоряженийĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырас туйăмпа воспитани парас пулать.

Дискуссисемпе митингсем тăвасси ĕç вăхăтĕнче пулмалла мар, ĕç вăхăтĕнче руководительсен мĕнпур хушăвĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла,—тесе вĕрентнĕ Ленин. Ленинăн çак кăтартăвĕ тăрăх, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ çакăн пек хушу пачĕ: предприятире парти организацийĕсен тата ытти мĕнпур организацисен пухăвĕсене, заседанийĕсене, канашлăвĕсене ĕç вăхăтĕнче ирттермелле мар, предприятисенчи рабочисемпе служащисем обществăллă организацисем хушнă ĕçсене производствăри ĕçрен пушă вăхăтра кăна тумалла.

Предприятире хуçалăх, парти тата профсоюз руководствин ĕçĕсене пĕрпĕринпе килĕшӳллĕн туса пыни уйрăмах кирлĕ. Партиллĕ ĕçлĕ сыхăну, хуçалăх ĕçĕнчи тата партиллĕ ĕçри руководительсем пĕр-пĕринпе туслăн тата килĕштерсе ĕçлени — предприяти коллективне пĕтĕçтерет тата ăна ĕçĕн тимĕр пек çирĕп дисциплинишĕн, ĕçĕн пысăк тухăçлăхĕшĕн тата пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн, производствăна çĕклеме чăрмантаракан мĕнпур çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кĕрешме мобилизацилет.

Хуçалăх руководителĕсем — единоначальниксем—чылайĕшĕ хăйсен задачисене ăнланса çитеймен-ха. Хăйсене панă влаçпа усă курас тата дисциплинăна татăклăнах çирĕплетес вырăнне, вĕсем прогульщиксем çине, брак тăвакансем тата производство дезорганизаторĕсем çине либерална пăхаççĕ. Директорсенчен чылайĕшĕ хăйсене пăхăнса тăракансене пĕлмеççĕ, хăйсен распоряженийĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемеççĕ, распоряженисене пурнăçа кĕртмен работниксене ответ тыттармаççĕ, тирпейсĕр, юрăхсăр тата ялăп ĕçлекен работниксене вăхăтра улăштармаççĕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене пурнăçласшăн кĕрешнĕ çĕрте совет хуçалăхĕн кашни работникĕ массăсен творчествăллă пуçарулăхне ертсе пыма, производство организацине технологине наукăпа техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсен шайĕ таран çĕклеме, техникăпа вăл мĕн пама пултарнă таранах усă курма тивĕçлĕ.

Единоначалине çирĕплетесси — партипе правительство предприятисене йĕркелĕх туса хурас, ĕç дисциплинине çирĕплетес, ĕç тухăçлăхне ӳстерес тата продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе йышăнакан мероприятисене пурнăçа кĕртмелли чи кирлĕ услови, социализм çĕршывĕн хуçалăхпа оборона хăватне малалла тĕреклетесе пымалли чи кирлĕ услови пулса тăрать. «...Предприятисенче единоначалине татăклăнах çирĕплетмелле, предприяти директорĕ ĕçре тулли влаçлă руководитель, предприяти ĕçĕсемшĕн тата производствăри йĕркелĕхшĕн пĕтĕмĕшпех ответлă руководитель пулса тăмалла». (ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă резолюцирен).

**Я. ЖУКОВСКИЙ.**

ВКП(б) Обкомĕнче

## Колхозсенчи подсобнăй предприятисем çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çак кунсенче Çĕмĕрле тата Канаш районĕсенче колхозсенчи подсобнăй предприятисем мĕнле ĕçлени çинчен сӳтсе-яврĕ. Çĕмĕрле тата Канаш райсоветĕсен исполкомĕсем çав предприятисене çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕ.

Канаш районĕнче 6 çил арманĕ, 3 шыв арманĕ, 5 кĕрпе арманĕ ĕçлемесĕр лараççĕ. Çĕмĕрле районĕнче 3 çил арманне, 1 шыв арманне, 5 кĕрпе арманне халĕ те ĕçе яман.

1941 çулта кивĕ армансене юсаса ĕçе ярас тата çĕнĕ армансем лартас тĕлĕшпе палăртнă плана пурнăçа кĕртме Çĕмĕрлене Канаш районĕсем тытăнман, стройматериалсене хатĕрлесе хуман, колхозсенчи подсобнăй предприятисенче учетпа отчет ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Колхозсенче кирпĕч-черепица завочĕсем туса лартас ĕç те тивĕçлипе пурнăçа кĕрсе

# Пичет—большевикла партин чи çивчĕ хĕçпăшалĕ

Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» хаçат типографийĕнче. **Укерчĕк çинче:** стахановка-наборщица Серафима Якимова ĕçре.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

## Корреспондент ятне чыслăн тытса пыратпăр

Рабселькор—хисеплĕ ят. Çак хисеплĕ ята кашни рабселькорăн чыслăн тытса пымалла. Корреспондентăн хăйĕн пĕлӳлĕхне куллен ӳстермелле, унăн нумай пĕлмелле. Хаçатсем çине çырса тăракан çын — производствăра малта пыракан пулмалла.

Хĕрлĕ Çар ретĕнче корреспондентăн уйрăмăнах отличник пулмалла. Çар ĕçне тата политикăна лайăх пĕлес пулать. Вĕренӳре юлса пыракансене пулăшса пымалла. Дисциплинăллă красноармеец е командир çеç корреспондент ятне илтме тивĕçлĕ. Çакна эпир, Хĕрлĕ Çарти корреспондентсем, яланах асра тытса пыратпăр.

Пирĕн №-ски чăсре Чăваш республикинчен килнĕ красноармеецсем пур. Вĕсенчен нумайĕшĕ çар ĕçне вĕренес сĕрте малта пыраççĕ, чăсри отличниксем шутланаççĕ. Акă, Григорьев юлташа илер. Вăл Хĕрлĕ Çар ретне килсен, пирвайхи кунсенчен пуçласах вĕренӳре, ĕçре ытти красноармеецсене пример кăтартса пырать. Çар техникине лайăх вĕренсе çитнĕ. Командовани Григорьев юлташа нумай тиражлă хаçатăн редакторĕ пулса ĕçлеме уйăрчĕ.

Çавăн пекех Васильев, Морковкин, Толстов, Софронов юлташсем те вĕренӳре отличниксем шутланаççĕ. Вĕсем пурте чăсре тухса тăракан хаçат ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Хăйсен примерĕсемпе ытти красноармеецсене çар ĕçне вĕренме пулăшаççĕ. Корреспондентăн ятне чыслăн тытса пыраççĕ.

Эпĕ Хĕрлĕ Çар ретне киличчене хаçат ĕçне питĕ юратнă. Малтанхи вăхăтра колхозра стена хаçачĕ кăларас ĕçре активлăн хутшăнса пынă. Унтан Вăрнар районĕнчи «Социализм çулĕпе» хаçат редакцинче ĕçленĕ. Кунта килсен те хаçат ĕçне пăрахмарăм. Хамăр чăсри нумай тиражлă хаçатăн корреспонденчĕ шутланатăп.

Çар ĕçне тăрăшса вĕренетĕп. Халĕ ĕнтĕ кĕçĕн командир пулса ĕçлеме тивĕçлĕ пултăм. Манăн отделени малта пыракан отделенисенчен пĕри шутланать. Чăсри нумай тиражлă хаçатра пирĕн отделени çитĕнĕвĕсене çутатса тăраççĕ. Вăл пире татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

**Кĕçĕн сержант Н. КОЗЛОВ.**

Украина ССР.

## Ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе пыратпăр

Хусан чугунçулĕн Канашри узелĕнче 9 стена хаçачĕ тухса тăрать. Узелти парторганизаци çак стена хаçачĕсен ĕçĕсене яланах тĕрĕслесе пыратъ. Халĕ станцире, депора тата вагоннăй службăра стена хаçачĕсем вăхăтра тухма пуçларĕç, хаçатсен содержанийĕ те аванланчĕ.

Стена хаçачĕсен ĕçне тишкерсе тухас тĕлĕшпе эпир выставка туса иртертĕмĕр. Выставкăра лайăх ĕçлекен стена хаçачĕсене палăртрăмăр. «Путеец», «Светофор» стена хаçачĕсем шĕремĕш вырăна тухрĕç. Çавăн пекех «Тяговик» стена хаçачĕ те начар мар ĕçлет. Выставкăра çав стена хаçачĕсен паха опычĕсемпе ытти стена хаçачĕсен редакторĕсем паллашрĕç. Çакăн хыççăн, пирĕн узелти стена хаçачĕсем чугунçул транспорчĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç.

Узелта браксем, простойсем чакса пыраççĕ. Производствăллă плана тултарас ĕçре те çитĕнӳсем турăмăр. Пире стена хаçачĕсем сахал мар пулăшрĕç.

Чугунçул çинче ĕçлекенсем хушшинче малтанхи вăхăтра ĕç дисциплини япăх пулнă. Стена хаçачĕсем прогулсене хирĕç татăклăн кĕрешсе пыма тытăнчĕç. Халĕ узелта прогулсем, ĕç дисциплинине пăсакансем сахалланчĕç. Çак енчен «Тяговик» стена хаçачĕ уйрăмах лайăх тĕслĕхсем кăтартать.

Стена хаçачĕсем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Апла пулин те, ĕçре çитменлĕхсем çук мар-ха. Стена хаçачĕсем XVIII партконференци решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе тивĕçлипех ĕçлемеççĕ. Стена хаçат редакторĕ Егоров юлташ хăйне ыйтăнă ĕç çине сӳрекĕн пăхать. Вăл стена хаçатне йĕркелĕ кăларса тăма тытăнман. «Вагонник» стена хаçачĕ те япăх ĕçлет.

Малашне эпир хамăр ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе пыма пулатпăр. Партин XVIII конференци йышăннă решенисене пурнăçласси пирĕн умра тăракан ответлă та хисеплĕ задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

**РЖАВИН.**

Партком секретарĕ.

## ОТВЕТЛĂ ТА ХИСЕПЛĔ ĔÇ

Иртнĕ çулсенче час-часах çакăн пек пулса тухатчĕ: черетлĕ номере пичетлесе пĕтерсе подписчиксене салатса паратăн, тепĕр 3 кунтан номер тухмалла, анчах ăна валли пĕр материал та çук. Тепĕр чух тата селькорсенчен илнĕ çырусене пăхса тухатăн, каллех юрăхлисем çук. Çапла вара ирĕксĕрех редакци сотрудникĕсен хăйсен мĕн те пулин шутласа çырма тиветчĕ. Çакă ĕнтĕ вăл хаçата çыракансем сахал пулниччен килнĕ. Халĕ çакнашкал йĕркене йăлтах пĕтернĕ.

Кăçал пирĕн редакци 1300 çыру илнĕ. Кашни кун 10—12 çыру килет. Хаçат çине çыракансен шучĕ 250 çын ытла. Пирĕн актив шутĕнче коммунистсем 48 çын, комсомолецсем 70 çын ытла, агрономсемпе зоотехниксем—14, колхоз председателĕсем, бригадирсем 21, учительсем тата ыттисем те нумай.

Район пурнăçне тĕплĕн çутатса тăрас, ĕçсыннисене хаçат урлă политикăллă воспитани парас задачăна пурнăçа кĕртес тесен, хаçата районри руководительсем, актив ытларах çырса тăни кирлĕ. Районри руководительсем, партипе совет работникĕсем, ялхуçалăхĕнчи специалистсем хаçат ĕçне активлăн хутшăнса ĕçлеме тытăнчĕç. Апрель уйăхĕнче пичетленĕ 9 умстатьяран 8-шне райком секретарĕ, райсовет исполком председателĕ, райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ, агрономсем, зоотехниксем тата ытти работниксем çырчĕç.

Хаçата çирĕп план тăрăх кăларса тăратпăр. Кашни уйăх валли план тăватпăр, ăна ВКП(б) райком бюровĕ çирĕплетет. Май уйăхĕ валли плана çапла хатĕрлерĕмĕр: малтанах ялхуçалăх енĕпе тата çуракине лайăх иртерех шутпа мĕнле ыйтусем çинчен çырмаллине райçĕрĕç пайĕн заведующийĕпе калаçса килĕштерĕмĕр. Вăл агрономсемпе зоотехниксене чĕнсе илчĕ те, вĕсене райхаçатăн ĕç планĕпе паллаштарчĕ. Çавăнтах эпир камăн, хăш числара тата мĕнле темăпа çырмаллине палăртрăмăр.

Редакци ĕçне тивĕçлипе йĕркеленĕ хыççăн хаçата яланах вăхăтра кăларса тăма тытăнтăмăр, йăнăшсем те сахалланчĕç.

Халĕ ТАСС информацийĕсене чăвашла Шупашкартан илсе тăратпăр, ку пирĕн питĕ нумай пулăшать. ТАСС материалĕсене чăвашла куçарни вулакансене кăмăла каять, вăл пирĕн ĕçе те çăмăллатрĕ. Пирĕн вулакансем те халь ютçĕршывсенчи тата Совет Союзĕнчи çĕнĕ хыпарсене вăхăтрах пĕлсе тăраççĕ.

Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те çук мар. Çитменлĕхсенчен пĕри вăл—стена хаçачĕсене кирлĕ таран пулăшса пыманни. Чылай колхозсемпе учрежденисенче стена хаçачĕсем хĕллехи уйăхсенче вуçех тухман. Уйăхра пĕрре е иккĕ тухакан хаçатсем халĕ те пур-ха. Райхаçат урлă консультацияллĕ статьясем, обзорсем сахал çыратпăр. Вырăнсенче стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăччăр тесен, редакци работникĕсен селькорсемпе ытларах ĕçлемелле, редколлеги членĕсене индивидуальнăй консультацисем памалла.

Стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсен заочнăй курсне 25 çын явăçтарнă пулнă, халĕ вĕсенчен 12-шĕ вĕренсе тухрĕç. Заочниксенчен И. Грачков, П. Козлов, А. Орлов юлташсем «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухрĕç. Грачковпа Орлов юлташсем хăйсен колхозĕсенче стена хаçат кăларассине аван йĕркелерĕç. Грачков селькор ытти колхозсенчи стена хаçатсен редколлегийĕсене те пулăшса пырать, районри хаçат çине те активлă çырса тăрать.

Çакна каламалла, ВКП(б) райкомĕпе унăн пропагандăпа агитаци пайĕ стена хаçачĕсем тата заочнăй курссем пирки пĕтĕм ĕçе редакци çине хучĕç, пуçламĕш парторганизацисем те стена хаçатсен ĕçĕсемпе сахал интересленеççĕ. Çак çитменлĕхсене çитес çывăх вăхăтрах пĕтерсе хумалла.

Ялхуçалăх ыйтăвĕсене, вырăнти промышленность ĕçĕсене, çавнашкалах парти пурнăçне пирĕн хаçат çителĕксĕр çутатать тесе каласшăн мар, анчах хăшпĕр кирлĕ ыйтусемех хаçат страницисенче сахал вырăн йышăнаççĕ. Колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановлени тăрăх пĕр-ик статья тата вăтĕвек заметкăсем çырнипех чарăнтăмăр.

Большевикла пичет ĕçĕ—ответлă та хисеплĕ ĕç. ЦК ВКП(б) районри хаçатсем çинчен йышăннă постановлението пирĕн яланах асра тытас пулать, ăна пурнăçа кĕртсе пымалла. Хаçатăн активĕ пысăк, редакци аппаратĕнче хаçат ĕçне пĕлекен работниксем, ытти условисем те çителĕклĕ, тимлĕнрех ĕçлени çеç кирлĕ.

**С. САПЕРКИН.**

Элĕк районĕнчи «Колхоз хаçачĕн» редакторĕ.

## Колхозри стена хаçачĕ

Колхозра ĕç дисциплинине çирĕплетес, колхоз хуçалăхне вăйлатас, фермăсен, бригадăсен тата стахановецсен паха опычĕсене çутатса, çав опытсене ытти бригадăсене куçарма пулăшас ыйтусене «Чăваш Коммуни» колхозри «Социализм çулĕпе» стена хаçачĕ хăйĕн ĕçĕнче тĕп вырăна хурать.

Редколлегинче 5 çын, пурте комсомолецсем. Хаçата малтанхи вăхăтра калăни уйăхра пĕрер номер кăларса тăнă, халĕ кашни 15 кунта кăлараççĕ. Редколлеги план тăрăх ĕçлет. Çитес номерте мĕн çинчен çырмаллине малтан яланах редколлеги членĕсемпе пухăнса сӳтсе-явăççĕ.

Хаçат ĕçне колхозри стахановецсемпе ударниксем активлăн хутшăнаççĕ. Колхоз агрономĕ Илья Егоров, ферма заведующийĕ Шупташков, çавăн пекех комсомолецсем те активлăн çырса тăраççĕ. Хаçатра тухнă материалсен витĕмлĕхĕ ӳсрĕ.

Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ конюхсене валли лайăх условисем туса пама, кашни конюх валлиех койкăсем илсе пама йышăннă. Çак решенине колхоз правленийĕ пурнăçламан. Çакăн çинчен стена хаçачĕ çине çырса кăларнă. Çакăн хыççăн правлени хăйĕн решенине ĕçе кĕртнĕ.

Стена хаçачĕ вăйлă тырпул туса илес ĕçре колхоза пулăшать. Колхозниксем кăçал кашни гектартан 14 центнертан кая мар тĕштырă туса илме пулчĕç.

**П. НИКИТИН,**
**Л. СЕМЕНОВ.**

Кӳкеç, Чăкăр ялсовечĕ.

## РЕДАКТОР

Петр Анисимов иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче, Хĕрлĕ Çартан тавăрсанах, древкомбинатри виççĕмĕш номерлĕ цеха ĕçлеме кĕнĕ. Хастарлă комсомолецăн пултарулăхĕ малтанхи кунсенчех палăрнă. Вăл хăйне шанса панă ĕçе пысăк тимлĕхпе тата пахалăхпа пурнăçласа пыма тытăннă. Çакна май унăн авторитечĕ те ӳснĕ.

Пĕррехинче цехри комсомолецсен пухăвĕнче стена хаçат редакторне суйласси çинчен ыйту лартнă пулнă. Кама суйлас, кам ĕçе лайăхлатма пултарĕ? Çак ыйту чылаях шухăлаттарнă хăшпĕр юлташсене. Уйрăм çынсем çинчен калаçма пуçланă. Анисимов юлташ ятне асăннă.

— Юрăхлă кандидатура. Иккĕленмелли çук, ĕçлеме пултарать,—тенĕ юлташĕсем ăна.

Çапла, декабрь уйăхĕнчен пуçласа комсомолец-плановик Анисимов юлташ «Стахановец» стена хаçачĕн редакторĕ пулса ĕçлеме тытăннă.

Çĕнĕ редактор хаçат ĕçне юратнă, тимлĕнех ĕçе тытăннă. Тăтăшах редколлеги членĕсемпе пухăнса хаçат ĕçне лайăхлатасси çинчен сӳтсе-явнă, хаçат тавра массăна ытларах явăçтарма тăрăшнă.

Унтанпа вăхăт нумаях та иртмерĕ. «Стахановец» хаçат чăн-чăнах, малтанхипе танлаштарсан, хăйĕн ĕçне лайăхлатма пултарчĕ. Кăçал пĕтĕмпе 6 номер тухрĕ. Вăтамран кашни номерĕнчех 6—8 заметка пичетленнĕ, хушăран карикатурăсем те, картинăсем те пур. Ку уйрăмах хаçата илемлетет.

Хаçат çине çырса тăракансен хисепĕ ӳсни курăнать. Малтанах 12—15 çын çырса тăнă пулсан, халĕ вĕсем 21 çынна çитрĕç. Стахановецсемпе техприемщиксем, мастерсемпе конторăри служащисем—çаксем çырраççĕ хаçат çине. Смена мастерĕ Байняшев, стахановка Большакова, техприемщица, райсовет депутачĕ Краснова, бухгалтер Благовещенский, нормировщик Константинов юлташсем стена хаçачĕн чи активлă корреспонденчĕсем.

Хаçата план тăрăх кăларса тăраççĕ. Хаçат тухас умĕн редактор вăл номерте мĕнле заметкăсем, мĕнле ыйту тăрăх тата кам çырмаллине кăтартса план тăвать. Кайран ăна редколлегин ытти членĕсемпе сӳтсе-яваççĕ. Çапла сӳтсе-явни вара кирлĕ ыйтусене хаçат çинче анлăрах сутатма пулăшать.

— Эпир пуринчен ытларах производство ыйтăвĕсене анлăрах сутатса пыма тăрăшатпăр. Пирĕн тĕп ыйту—ВКП(б) XVIII конференцийĕн решенийĕсене пурнăçласа пырасси пулать. Ку тĕлĕпе вара стахановецсемпе мастерсен статьисене организацилетпĕр, — тет Анисимов юлташ.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче 5-мĕш номер тухнă. Ку номерте пĕтĕмпе 6 заметка пичетленнĕ. Умстатья вырăнне технорук статьине кĕртнĕ. Унта пуринчен ытла цех коллективĕ Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хӳтлăнса хăй çине апрельти плана 27-мĕшне тултарма, продукци пахалăхне ӳстерме обязательство илни çинчен каланă. Ун хыççăн стахановкăсем Большаковăпа Мартынова çырнă пысăках мар заметка. Вĕсем тухăçлă ĕçлеме мĕн чăрмантарни çинчен çутатса параççĕ. «Инструментальщиксем пире ытăх пахалăхлă инструментсем параççĕ, вĕсем эпир каланине итлемеççĕ. Çакă вара пире ĕçре пысăк чăрмав кӳрет»,—теççĕ вĕсем. Мастер Байняшев юлташ столовăйĕнче чай, кофе сутманни тата апатсен ассортиментне нумайлатмалли çинчен çырнă. Диспетчер Ненастин юлташ хăйĕн статьинче ĕçри çитменлĕхсене кăтартнă, вĕсене пĕтермелли майсем çинчен çутатса панă. Нормировщик Константинов юлташ Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту мĕнле сарăлса пыни çинчен çырнă т. ыт. те.

«Стахановец» хаçат стахановецсен паха опычĕсем çинчен çутатсах тăрать. Кун çинчен кашни номертех курма пулать.

Виççĕмĕш номерлĕ цех коллективĕ партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçласа пырса хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Май уявĕ умĕнхи ăмăртура вăл уйрăмăнах паха результатсем кăтартрĕ—апрель планне срокчен тултарчĕ. Ку енĕпе цехри «Стахановец» стена хаçачĕ те коллектива сахал мар пулăшнă. Малашне ĕнтĕ хаçат хăй ĕçне лайăхлатса пырса чăн-чăнах социализмлă ăмăрту организаторĕ пулса тăрĕ.

**Хар. ЛИСИН.**

## Стена хаçачĕ производство ĕçне лайăхлатма пулăшать

КАНАШ. «Швейник» промартель çумĕнче кашни уйăхра пĕр номер стена хаçачĕ тухса тăрать. Стена хаçачĕ артель членĕсене производство планне вăхăтра тултарма мобилизацилесе пырать. Артель XVIII партконференци решенийĕсене пурнăçласа пырса, хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Стахановла ĕçлекен рабочисен йышĕ ӳссех пырать.

Артель график тăрăх ĕçлет. Производство планне кашни сменăра тата кашни кун тултараççĕ. Çавăн пекех туса кăларакан продукци пахалăхĕ те лайăхланчĕ. Цехсенче тасалăх туса хунă. Çак ĕçсене тума стена хаçачĕ сахал мар пулăшу панă.

Стена хаçачĕ çине çырса тăракансем 25 çынна çитрĕç. Стахановецсем, мастерсем, цех начальникĕсем стена хаçачĕн ĕçне активлăн хутшăнаççĕ.

**Н. ЕГОРОВ.**

Артельти стена хаçачĕн редакторĕ.

## Пичет кунĕ çинчен калаçу ирттернĕ

Сĕнтĕрти НКВД отделенийĕнче «На страже» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Вăл стена хаçачĕ пирĕн командованине тата пуçламĕш парторганизацине яланах пысăк пулăшу парса пырать.

Пĕр вăхăтра пирĕн ленкомната начар ĕçлетчĕ. Стена хаçачĕ çак ыйтăва йĕркелеме пулăшрĕ.

Çак кунсенче стена хаçат редакторĕ Смолькин юлташ хамăр работниксен канашлăвне ирттерчĕ. Унта большевикла пичет кунĕ çинчен каласа пачĕ.

**М. ИСАЕВ.**

Вăрмар райсоюзĕнчи «Кооператор» стена хаçачĕн черетлĕ номерне кăлараççĕ. **Укерчĕк çинче** (сулахайран сыпăмалла) — редколлеги членĕсем: склад заведующийĕ, художник **И. Н. Недеров**; калькулятор, ВКП(б) членĕ, редактор **Л. И. Иванов**; бухгалтер **А. Г. Гаврилова** юлташсем.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Куславккари типографинче. **Укерчĕк çинче:** печатница Зоя Чунаева хаçат пичетлет.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

## Хаçат-журналсем сарасси ӳссе пырать

Совет Союзĕнче большевикла пичет кашни çулах хăвăрттăн ӳссе пырать. Пирĕн çĕршывра 1938 çулта 8.550 хаçат тухнă. Вăл хаçатсен тиражĕ 38.000.000 экземпляр пулнă. Патша Российĕнче 1913 çулта мĕнпурĕ те 859 хаçат кăна тухнă.

«Патша Российĕ халăхсен тĕрми пулнă. Патша Российĕнчи нумай йышлă вырăсмар халăхсем пачах правăсăр пулнă... Национальноçсен чĕлхипе хаçатсемпе кĕнекесем кăларма чарнă, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕренме чарнă. Патша правительстви наци культури кирек мĕнле палăрнине те пăчăртарса лартма тăрăшнă...» (ВКП(б) историйĕ, кĕçĕке курс, 6-мĕш стр.).

Совет влăçĕ çеç вырăсмар халăхсене пурне те пĕртан турĕ. Халĕ кашни республикăрах хаçат-журналсем тухса тăраççĕ. Вырăсмар халăхсем пурăнакан облаçсемпе республикăсенче хаçат-журналсене, кĕнекесене тăван чĕлхепе кăлараççĕ. 1938 çулта Совет Союзĕнче хаçат-журналсем 70 чĕлхепе тухнă. Хаçатсен хисепĕ 10 хут, вĕсен тиражĕ 14 хут ӳснĕ.

Чăваш республикинче халĕ хаçат-журналсем хамăрăн тăван чĕлхепе тухаççĕ. Пирĕн республикăра хаçат-журналсем сарасси ӳссе пырать. Иртнĕ çулта 3.191.000 тенкĕлĕх хаçат-журналсем сарнă пулнă. Республикăра тухса тăракан хаçатсене сарасси ӳснипе пĕрлех, районри хаçатсене çырăнса илекенсем те ӳшланса пыраççĕ.

Çыхăну работникĕсем хăйсен ĕçне лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем хаçат-журналсем сарас ĕçе вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçлама тăрăшаççĕ. Хаçатсем сарас тĕлĕшпе çыхăну работникĕсемсĕр пуçне рабочисем, служащисем тата колхозниксем активлăн ĕçлеççĕ. Активпа таччăн çыхăнса ĕçлени ĕçре пысăк пулăшу парать. Чăваш республикинчи çыхăну работникĕсем хаçат-журналсем сарас плана пĕрремĕш кварталта 104 процент тултарчĕç. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, хаçат-журналсем сарасси кăçал 22 процент ӳсрĕ.

Калинински, Пăрачкав, Елчĕк, Элĕк, Йĕпреç, Шупашкар районĕсем тата Шупашкар хули малти вырăна тухрĕç. Вĕсем хаçат-журнал сарас плана пысăк çитĕнӳсемпе пурнăçланă. Çак районсенче партипе комсомол тата профсоюз организацисем уйăрнă çынсем уйрăмах пысăк пулăшу панă.

Шупашкар хулинче мĕнпур подписка укçинчен 96 процентне çыхăну активĕ вăйĕпе пухнă. Хаçат-журналсем сарас ĕçре А. Цыгарова (Заготскот контори), Афанасьев (Чăвашпромсоюз), Барсук (Росснабсбыт), Кузнецов (Стройтрест), Моргунова (Кооптехникум), Овдин (Стройтехникум), Токсубаева (Пединститут), Павлов (Наркомфин) юлташсем лайăх ĕçлерĕç.

Хулари çыхăну работникĕсем те начар мар ĕçлерĕç. Госбанк çумĕнчи çыхăну отделенийĕ плана 190 процент ытла тултарнă. Отделени начальникĕ Волков юлташ аван ĕçленине палăртас пулать.

Республика тăрăх илсен плана тултарнă пулин те, ĕçре çитменлĕхсем çук мар-ха. Хăшпĕр районсенчи çыхăну работникĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Шăхасан, Сĕнтĕр, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ, Чкаловски, Шăмăршă, Красноармейски, Канаш, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри районĕсем тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман. Вĕсем хаçат-журналсем сарас плана тултараймарĕç. Активпа ĕçлесе асăннă районсем хакламаççĕ. Çавăн пекех пиçмоносецсем хушшинче те сахал ĕçленĕ.

Çыхăну работникĕсен ĕççыннисене йышăн кĕтсе илмелле, вĕсемпе культурăллă пулмалла. Брак тăвассине, растратăсене тĕпчипех пĕтерес пулать. Анчах çак енчен хăшпĕр çыхăну работникĕсем кайра тăраççĕ.

Пирĕн республикăри çыхăну работникĕсем Мордва республикине ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура малти вырăна тухма пур майсем те çителĕклĕ. Кашни çыхăну работникĕн хăйĕн ĕçне юратса тата тӳрĕ кăмăлпа туса пыни кирлĕ.

**Е. ОСИПОВ.**

## Пахча-çимĕç ĕрчетекенсен кружокĕ

Апрелĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа Кӳлхĕрринчи туллимар вăтам шкулта пахча-çимĕç ĕрчетекенсен кружокĕ ĕçлеме пуçларĕ. Вăл кружока учительница Мария Павловна ертсе пырать.

Пахча-çимĕç ĕрчетекенсен кружокĕнче вĕренекен ачасем вăрлăхсене шӳтерсе ещĕксем çине акнă. Ещĕксем çине акнă вăрлăхсем шăтма пуçларĕç. Вăрлăхсем мĕнле акасси тата вĕсене пăхса ӳстересси çинчен Мария Павловна расписанипе вĕрентсе пырать.

**Г. НИКИФОРОВ.**

# ПИРĔН АКТИВ

ВКП(б) Центральный Комитечĕ иртнĕ çулти августăн 20-мĕшĕнче районри хаçатсем çинчен йышăннă постановлени хаçат ĕçне лайăхлатма пысăк пулăшу панă. Пирĕн «Ударник» хаçат редакцийĕ хăйĕн ĕçне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртерчĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ, редакци тулашĕнчи авторсен активне хаçат ĕçне ытларах явăçтарас майпа, районра малта пыракан çынсене тата хуçалăх организацисенчи специалистсене чĕнсе канашлусем ирттерме хушнă. Çак кăтартăва пурнăçласа «Ударник» хаçат редакцийĕ 1940 çулти сентябрь уйăхĕнче агрономсемпе зоотехниксен канашлăвне туса ирттернĕ. Унта колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе малта пыракансене те чĕннĕ. Çавăн пек канашлу ирттерни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене сăлтавĕсене уçса пачĕ, малашне тумалли ĕçсене палăртса хăварма пулăшрĕ.

Канашлу ирттернĕ хыççăн агрономсемпе зоотехниксем хаçат ĕçне активлăнрах хутшăнма пуçларĕç. Халь пирĕн хаçат çине Д. Симушкин, И. Сальенский зоотехниксем, А. Спиридонов, А. Трутнев агрономсем т. ыт. çырса тăраççĕ.

Декабрь уйăхĕнче редакци тепĕр канашлу ирттерчĕ. Вăл канашлăва работниксемпе колхозри стена хаçат редакторĕсене, вулав çурчĕсемпе клубсен заведующийĕсене чĕнсе федякинецсен чĕнĕвне сӳтсе-яврăмăр.

Кунсăр пуçне тата предприятисемпе промартельсенчи стена хаçат редакторĕсен канашлăвне ирттернĕ.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе редакци март уйăхĕнче рабселькорсемпе предприятисенчи тата промартельсенчи стена хаçат редакторĕсен канашлăвне ирттерчĕ. Унта XVIII конференци кăларса тăратнă задачăсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен, райçĕрĕç пайĕн старший зоотехникĕ Ф. Тимофеев юлташ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтупа çырчĕ т. ыт. те.

ВКП(б) райкомĕн работникĕсем те хаçат ĕçне активлăрах хутшăнма тытăнчĕç. Партi райкомĕнчен çыракансен шучĕ 10 çынна çитет. Вĕсем пире ĕçре пысăк пулăшу параççĕ.

Эпир малтанхи вăхăтсенче хаçатăн умстатьисене редакци работникĕсем çеç, пуринчен ытла редакторăн çырмалла, тенĕ. Кун пек шухăш тĕрĕс марри халĕ ӳççăнах курăнса тăрать. Пирĕн хаçатăн умстатьисене халĕ редакци тулашĕнчи авторсем те çыра пуçларĕç. ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ А. Гордеев юлташ 3 умстатья çырса кăларчĕ. Çавăн пекех, райсовет исполкомĕн финанс пайĕн заведующийĕ А. Анкудинов юлташ финанс ыйтăвĕпе умстатьясем çырчĕ т. ыт.

Оборонăллă ĕçсем çинчен Осоавиахим райсовечĕн председателĕ П. Павлов юлташ çырса тăрать. Вăлах халь Осоавиахимăн XV-мĕш лотерейĕ çинчен умстатья çырса пачĕ.

Редакци рабселькорсен вăйĕпе уйрăм страница организацинче. Селькор П. Крысин районри малта пыракан Чучукассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз çинчен пĕр полоса организацилесе пачĕ. Вăл страницăра колхозра малта пыракан çынсен: бригадирсен, овощеводсен, дояркăсен, стахановецсен тата ыттисен статьисене панă. Колхоз икĕ çул хушши ĕнтĕ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă. Кăçал та выставка участникĕ пулма кандидата тăратнă. Колхоз председателĕ пулса райсовет депутачĕ Д. Антонов ĕçлет. Унăн статьисем те пирĕн хаçатра пичетленнисем пулнă.

Авторсен коллективĕ ӳссе пыни хаçат редакцин ĕçне çĕнетсе лайăхлатма май пачĕ. Хаçатра халĕ ĕнтĕ вырăнти ыйтусем тăрăх çырнă материалсем ытларах пичетленсе пыраççĕ. Çавăнпа пĕрлех, ТАСС материалĕсемпе те усă курасси лайăхланчĕ.

Хаçата илемлĕрех кăларас тĕлĕшпе тата эпир тепĕр май тупрăмăр. Пирĕн хаçатра халĕ «Бюро-клише» ӳкерчĕксемсĕр пуçне вырăнти темăсем тăрăх тунă карикатурăсемпе ӳкерчĕксем те тухаççĕ. Ку тĕлĕшпе пире вырăнти художник-самоучка Н. Евграфов юлташ пысăк пулăшу парать. Ăна эпир вырăнтан килнĕ çырусем тăрăх карикатурăсем ӳкерме паратпăр. Вăл ӳкерчĕксем хаçатри материалсене витĕмлĕрех туса хураççĕ.

«Ударник» хаçатăн авторитечĕ те ӳсех пырать. Халĕ хаçат тиражĕ 2000 экземпляра çитрĕ.

Рабселькорсемпе стена хаçат редакторĕсен заочнăй курсĕнче 20 çын вĕрсенет. Вĕсене пичет кунĕ тĕлне вĕрентсе кăлартăмăр. Кунсăр пуçне пичет кунĕ ячĕпе стена хаçачĕсен районри выставкине те организацилетпĕр.

Халиччен тунă ĕçсем — пуçламăшĕ çеç-ха. Редакцин задачи — тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе малалла татах та лайăхрах ĕçлесси, массăпа çыхăнса ĕçлессине çирĕплетесси пулса тăрать.

**Н. ТИТОВ.**
**Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «УДАРНИК» хаçатăн редакторĕ.**

**В. ИВЛЕВ.**
**«УДАРНИК» хаçат редакцин секретарĕ.**

# Майăн пĕрремĕш кунĕ ютçĕршывсенче

*Латин Америкинчи çĕршывсенче*

НЬЮ-ЙОРК, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Мексико хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, унта майăн пĕрремĕш ячĕпе Мексикăри рабочисен конфедерацийĕ организациленĕ демонстраци пулса иртнĕ. Профсоюзсен руководителĕсен даннăйĕсем тăрăх, демонстрацине 100 пин çын хутшăннă.

Çав агентство пĕлтернĕ тăрăхах, Вера-Круси хула залĕнче (Мексика) Майăн пĕрремĕш ячĕпе массăллă митинг пулса иртнĕ.

Юнайтед пресс агентствин пĕлтернĕ тăрăх, Монтевидеора (Уругвай) парламент çурчĕ патĕнче майăн пĕрремĕш ячĕпе 20 пин çынлă демонстраци пулса иртнĕ.

Майăн пĕрремĕш кунĕнче Буэнос-Айреса (Аргентина) моряксемпе порти рабочисем ĕçлеме чарăннă. Чугун-çул работникĕсем, трамвайщиксем тата автобуссем çинче ĕçлекен рабочисем 10 минута хушши ĕçлемен. Хулара Майăн пĕрремĕш ячĕпе 21 митинг пулса иртнĕ, çав митингсенче 40 пин çын пулнă.

Юнайтед пресс агентствин пĕлтернĕ тăрăх, Сант-Ягора (Чили), питех те вăйлă çăмăр çунине пула, çуртсенче темиçе митинг пулса иртнĕ.

Гаванăра (Куба) Майăн пĕрремĕш ячĕпе нумай пин çынлă демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрантсем хула урамĕсем тăрăх центральнăй парка кайнă. Каçхине муниципальнăй театрта Майăн пĕрремĕш ячĕпе пысăк концерт пулнă. Концертра пролетариллĕ юрăсем юрланă.

### *Китайра*

**Чунцин,** майăн 2-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Чунцинра Майăн пĕрремĕш ячĕпе фабрикăсемпе заводсен представителĕсен пухăвĕсем пулса иртнĕ.

### *Швецире*

**Стокгольм,** майăн 2-мĕш. (ТАСС). Майăн пĕрремĕшĕнче Стокгольмра Май уявĕ ячĕпе Швеции коммунистла парти организациленĕ пĕтĕм хулари митинг пулса иртнĕ.

# Иракри событисем

Иракра (Турципе тата Иранпа чикĕленсе тăракан çĕршывра) Англипе Ирак войскисем хушшинче вăрçă ĕçĕсем пуçланнă.

Рейтер агентствин пĕлтернĕ тăрăх, «Ирак правительствипе çулталăк каярах тунă договор тăрăх», Англи правительстви Ирак урлă англичансен войскисем валли коммуникаци линийĕ уçма шутлани çинчен пĕлтернĕ. Çакăн пирки килĕшӳ илнĕ хыççăн, Англи войскисем Иракра анса юлнă. Анчах та Англи правительстви Ирака çĕнĕ войскăсем яма шут тытсан, Ирак влаçĕсем ăна хирĕç тăнă. Ирак влаçĕсем Англин Ирака халичченех пынă войскисене малалла кайма чарнă. Çак сăлтавпа вара тытăçусем пуçланнă.

Германири Трансоцеан агентствин пĕлтернĕ тăрăх, Британин Вăтаçĕр тинĕсĕнчи флочĕ валли Иракран нефть парса тăракан нефтепровода Ирак войскисем касса татнă. Францири Офи (Гавас) агентствин çапла пĕлтерет: чылай вырăнсенчи нефть скважинисемпе нефтеперегоннăй заводсене тата нефтепровод линийĕ çинче вырнаçса тăракан мĕнпур станцисене Ирак çарĕ хăйĕн аллине çавăрса илнĕ. Çĕршывăн кăнтăр районĕнче Ирак войскисем противнике тĕл пулнă. Вăрçă вăрçакан икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине артиллерирен персе тăраççĕ тата авиацине усă курăççĕ.

Британири радиокомпани Ирак халăхне чĕнсе калакан обращение араб чĕлхипе радио тăрăх панă. Çав обращенире Иракăн хальхи правительствине сирпĕтсе пăрахма чĕннĕ. (ТАСС).

# Саваăнать советлă Рига

*Ригăри демонстрацине 325 пин çын хутшăннă*

РИГА, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Латвири ĕççыннисем рабочи класăн революциллĕ вăйĕсен боевой смотрĕн кунне пирвайхи хут совет çĕршывĕнчи халăхсемпе пĕрле ирĕклĕн те уççăн уявланă. Праздник республика столицинче — Рига хулинче уйрăмах чаплă иртнĕ.

Красноармейски площальре Рига гарнизонĕн чаçĕсем стройпа тăрса тухнă. Уява Эстони СС Республикинчен, Латвири уездсенчен хăнасем пынă.

10 сехетра парад пуçланать.

Капитализмăн халăх курайман пусмăрне сирсе пăрахас ĕçре Латви халăхне пулăшу панă Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă боецĕсем трибунăсем патĕнчен çирĕп утăмсемпе иртсе каяççĕ. Площадь тĕлĕнче аялта хăвăрт вĕçекен бомбардировщиксемпе истребительсен эскадрильисем ишсе çӳреççĕ. Трибунăсем çинчен тăвăллă овацисем кĕрлесе çĕкленеççĕ.

Парад вĕçленнĕ. Площаде хулари ĕççыннисен колоннисем, анлă хум пек, пырса кĕреççĕ.

Латви халăхĕн хаваслă демонстрацийĕ 4 сехет ытла пынă.

Хăйсен ирĕклĕ пĕрремĕш май уявĕнче Ригăри ĕççыннисем хăйсем совет влаçне тата большевикла партине вĕçĕхĕррисĕр парăннине, Сталин юлташа аслă юратупа юратнине, социализм çĕршывне тăшмансенчен сыхлама хатĕр тăнине кăтартса панă.

Совет правительствине тата унăн пуçлăхне — Молотов юлташа хăй аслă туйăмпа тав тунине Латви халăхĕ пĕтĕм чĕререн кăтартса панă, совет правительстви тулашри политикăна ăслăн ертсе пыни Латвири ĕççыннисене капитализм хăрушлăхĕсенчен, империализмлă иккĕмĕш вăрçă хăрушлăхĕсенчен хăтăлса юлма май пачĕ.

Демонстрацире Ригăри ĕççыннисем 325 пин çын пулнă.

Паян Даугавпилсра, Тукумсра, Лепайăра, Елгавăра тата Латвири ытти хуласенче те хăватлă демонстрацисем пулса иртнĕ.

# Ирĕке тухнă халăхăн хаваслă праздникĕ

*Каунасри демонстрацине 125 пин çын хутшăннă*

КАУНАС, майăн 1-мĕш. (ТАСС). Литвари ĕççыннисем майăн пĕрремĕш кунне пирвайхи хут ирĕклĕн те уççăн уявланă. Çакна кура праздник уйрăмах хаваслă та чаплă пулнă.

Паян ирхине пуçласах тумланса капăрланнă çынсем хула центрне пыма пуçланă. Октябрь Революцийĕн площаденче войскăсен чаçĕсем стройпа тăрса тухнă.

Парада пуçласа, трибунăсем патĕнчен пехота чаçĕсем, кавалери эскадронĕсем, артиллери батарейисем иртсе пыраççĕ. Каунасри граждансем хĕрлĕ воинсене хаваслăн, юратса саламланă.

Чи çĕнĕ конструкциллĕ боевой самолетсен сывлăшри парадне пĕтĕм чĕререн хавхаланса кĕтсе илеççĕ.

Парад вĕçленнĕ. Площадь темиçе минута хушши кăна пушанса юлнă, унта демонстрантсен пирвайхи колоннисем пырса кĕнĕ. Площадь ялавсемпе, плакатсемпе, транспарантсемпе чечекленнĕ, «вале», «урра» кăшкăрнисем янăра-янăра илтĕнме пуçланă. Çакă вăл Литвари ирĕке тухнă ĕççыннисем совет правительствин тулашри ăслă политикине — заводсенче, фабрикăсенче, уйхирсенче мирлĕ ĕçлесе пулăнма май панă политикăна саламлаççĕ.

Демонстрантсен колоннисем темиçе километра тăсăлса кайнă. Трибуна патĕнчен ĕççыннисем 125 пин çын иртсе кайнă.

* * *

Вильнюс, Шауляй, Мариямполь, Укмерг, Паневежис хулисенче тата республикăри ытти хуласенче те питех те пысăк çĕкленӳпе савăнăçлă пухусемпе демонстрацисем пулса иртнĕ.

# Май уявĕ Çĕмĕрлере

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Хула урамĕсем каçхинех уяв тумĕпе тумланчĕç. Пур çĕрте те хĕрлĕ ялавсем, партипе правительство руководителĕсен, Сталин юлташăн портречĕсем, лозунгсемпе плакатсем куранăççĕ. Аçта пăхнă унта савăнăçпа илемлĕх.

Каçхине пур клубсенче те рабочисен, инженерсемпе техниксен, служащисен чаплă ларăвĕсем пулса иртрĕç. Древкомбинат клубне 600 çын ытла пухăннă. Майăн 1-мĕш çинчен кунта ВКП(б) райкомĕн агитацине пропаганда отделĕн заведующийĕ Ильмент юлташ доклад туса пачĕ. Ун хыççăн пысăк концерт пулчĕ. Концертра пионерсен ансамблĕ, 4-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсен хорĕ, клуб сумĕнчи хореографи кружок коллективĕ, ФЗО шкулĕнчи струннăй оркестр хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕç.

«Большевик», «Труженик» заводсен тата чугунçул станци клубĕсенче те докладсем хыççăн концертсем пулчĕç.

Майăн 1-мĕш. Вăхăт 9 сехет те çитмен-ха. Хула урамĕсем тăрăх вĕçĕмсĕр çынсем, колоннăсем утма пуçларĕç. Пур çĕрте те илемлĕ юрă, музыка сасси илтĕнет. Епле илемлĕ паян! Çантăлăкĕ те уяр та ăшă.

10 сехет иртсен колоннăсем Хĕрлĕ площаделле кĕме пуçларĕç. Колоннăсен малти ретĕнче хисеплĕ коллективсем, Май уявĕ умĕнхи ăмăртура мала тухнисем. Комбинат коллективĕн колонни пуçĕнче 3-мĕш номерлĕ цех пырать. Вăл апрель уйăх планне 4 кун малтан тултарнă. Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава цехри чаплă стахановка, комсомолка Большакова юлташ йăтса пырать. «Большевик» заводра колоннăра малта пыма 1-мĕш бригада право илнĕ.

Шăп 11 сехетре митинг уçăлать. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ ячĕпе парти райкомĕн секретарĕ Павлов юлташ саламлă сăмах каларĕ. Вăл районри предприятисем Май уявне çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илни çинчен каласа пачĕ.

Древкомбинатри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен ячĕпе Грачев юлташ тухса сăмах каларĕ.

— Виçĕ пинлĕ коллектив ячĕпе сире хĕрӳллĕн саламлатăп, — тет вăл. — Пирĕн коллектив Май уявне производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕ. Эпир апрель уйăх планне срокчен иртнĕ тултартăмăр. 200 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлартăмăр, — тет Грачев юлташ.

Митинг хупăнать. Оркестр «Интернационал» вылять. Трибуна умĕн малтан ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем, унтан комбинат, «Большевик» завод колоннисем, шкулта вĕренекенсем, военизированнăй группăсем иртеççĕ.

— Сывă пултăр большевиксен Пĕтĕм Союзри Коммунистла Партийĕ — Совет Союзĕнчи ĕççыннисен малта пыракан отрячĕ.

— Сывă пултăр Марксăн — Энгельсăн—Ленинăн—Сталинăн аслă, никам çĕнтерейми ялавĕ! Сывă пултăр ленинизм!

Трибуна умĕнчен 10 пин çын ытла иртрĕ. Ку демонстраци пирĕн аслă тăван çĕршывăн хăватне, ĕççыннисем çĕршыва сыхлама яланах хатĕр тăнине тата тепĕр хут кăтартса пачĕ.



Атăл çинче

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

# Вкладчиксемпе заем тытакансемшĕн ытларах тăрăшмалла

Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци государство планне йĕркеллĕ, декадăран декадăна, кварталтан квартала тултарса пыма хушса хăварчĕ. Апла пулин те Куславкка, Первомайски, Октябрьски, Кувакино районĕсенчи перекет кассисемпе финанс пайĕсем ялсенче заем укçи пухассине пĕрремĕш кварталта чакарчĕç. Çавăн пекех, 1938 çулти заема халăх хушшине вырнаттарасси тата перекет кассине вкладчиксем явăтарасси те çителĕксĕр пулса пырать. Улатăр районĕ иккĕмĕш квартала кĕнĕ хыççăн та хăйĕн ĕçне тӳрлетме васкамасть-ха. Малтанхи икĕ ӳнăкунлăхра ялсенче заем укçи пачах пухман.

Перекет кассине ытларах вкладчиксем явăтарас тесен, ĕççыннисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне анлăн туса пыни кирлĕ. Агитаци ĕçĕнче вырăнти паха опытсемпе ытларах усă курмалла. Çакăнпа малта пыракан перекет кассисенче ĕçлекен работниксем пĕтĕмĕшпех-усă кураççĕ. Акă, Пăрачкав районĕнчи Напольнăри перекет кассин агентствинче контролер пулса ĕçлекен Кулясов юлташ хăйĕн пĕтĕм ĕçне ялти активпа пĕрле туса пырать. Çавна май, Кулясов юлташ перекет кассине вкладчиксем явăтарассине яланах, кварталтан кварталах тултарса пырать.

Элĕк районĕнчи Таут ялĕнчи перекет кассин агентствинчи М. Хомурова юлташ та лайăх примерсем кăтартса ĕçлет. М. Хомурова юлташ ĕçлеме тытăниччен çав агентствăра нихăçан та вкладчиксем явăтармалли плана тултарайман. М. Хомурова юлташ хăйĕн ĕçне чи малтан перекет кассине явăтарассинчен тытăннă. Хомурова юлташ тăрăшнипех ĕççыннисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне анлăн сарса янă. Ĕçрен тухнă хыççăн, Хомурова юлташ хăй те выляв таблици алла илсе ялсем тăрăх облигацисене тĕрĕслеме тухса çӳрет.

Анчах, пур агентствăсенче те Кулясовпа Хомурова юлташсем пек ĕçлеме вĕренсе çитеймен-ха. Вăл районсенчи перекет кассисене финанс пайĕсем енчен çителĕклĕ ертсе пыманнинчен те килет. Канаш районĕнчи Вăтапуç агентствинче контролер пулса Голубкин юлташ ĕçлет. Çак агентство вкладчиксем явăтарас пирки пачах ĕçлемест. Голубкин юлташ контролер ĕçĕсĕр пуçне çыхăну пайĕнче ĕçлет. Агентствăна малти рете кăларас пирки районра перекет касси те халиччен шухăшласа пăхман.

Районсенчи перекет кассисемпе финанс органĕсен ялсенчи перекет кассисен ĕçĕсене ялан тĕрĕслесе тăрассине чăн-чăнах организацилес пулать, кая юлса пыракан кассăсемпе агентствăсене вăхăтра пулăшса пымалла. Финанс ĕçĕнче малта пыраканнисен опычĕсемпе анлăн усă курса ĕçлеме вĕренес пулать.

Халĕ финанс работникĕсем умĕнче чи ответлă задача тăрать. Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулти кăларăм) заемшăн рабочисемпе служащисем хушшинче халех расчет туса пĕтермелле. Финагентсемпе заем уполномоченнăйĕсен колхозниксемпе единоличниксем хушшинче те заем укçине пĕтĕмпех пуçтарса пĕтерес пулать. Ку ĕçре ялсовет исполкомĕсен вĕсене кулленех практикăллă пулăшу парса пымалла.

Облигацисене алла валеççе панă чухне иртнĕ çулсенче пулнă çитменлĕхсене кăçал пачах тумалла мар. Иртнĕ çулхине хăшпĕр подписчиксем облигацисене вăхăтра алла илеймен пирки пĕрремĕш тиражра хутшăнаймасăр юлнă. Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулти кăларăм) заемăн та çак çулхине 3 тираж пулмалла. Пĕрремĕш тираж июнĕн 7—8-мĕшсенче, Петрозаводскра пулать. Çавăнпа та, кашни организацин тата ялсовет исполкомĕсен Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулти кăларăм) заем укçине вăхăтра пуçтарса, облигацисене халех подписчиксем аллине парас пулать. Кунпа пĕрлех, вырăнсенче вкладчиксемпе заем тытакансем хушшинче ĕçлессине вăйлатса пымалла.

**А. МИХАЙЛОВ.**

## Юлашки спектакльсем

Чăвашсен Государство Академи театрĕ майăн 8-мĕшĕнче республикăри районсенче гастроле тухса кайать.

Сезон хупăннă май, театрта юлашки спектакльсем лартса параççĕ. Майăн 5-мĕшпе 7-мĕшсенче «Мелкие козыри», майăн 6-мĕшĕнче тата сезон хупăннă кун — майăн 8-мĕшĕнче «Коварство и любовь» пьесăсене лартаççĕ.

# Çуллахи сезона хатĕрленеççĕ

Кӳкеçри вăтам шкулта (Шупашкар р.) физкультурăпа спорт ĕçĕ аван пынать. Шкулта комсомолецсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсене пысăк пахалăхпа иртternĕ. ГТО значокĕн нормисене йĕлтĕрпе 180 çын панă. ВЛКСМ обкомĕ пирĕн шкулти пуçламăш организацине хисеплĕ грамотăпа наградăланă.

ВЛКСМ обкомĕн наградине илнĕ хыççăн шкулти комсомолецсем физкультурăпа спорт ĕçне татах та лайăхрах туса пыма тытăнчĕç. Комсомолецсен гимнастикăллă ăмăртăвĕсене лайăх ирттернĕ. Ăмăртăва 80 çын хутшăннă.

Гимнастикăллă ăмăртăва ирттерес ĕçре Е. Дмитриева, Митрофанова, А. Иванова, К. Ефремова, Черкасова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Хальхи вăхăтра коллектив çуллахи сезона хатĕрленес енĕпе ĕçлет.

**В. НИКИТИН.**

## СУД

# Облигацисене пытарса хăварнăшăн

Шупашкарти «Заготзерно» конторинче ĕçленĕ бухгалтер А. Н. Румянцева Виççĕмĕш Пятилетка (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Заем облигацийĕсене подписчиксене салатса памасăр пытарса усранă. Çапла майпа вăл çинсене тивĕç заем облигацисене 545 тенкĕ хăй кăсьине чикнĕ.

Список тăрăх облигацине çинсене салатса панă пек тунă, ведомость çине хăй алă пуснă пулнă. Çав облигацисемпе выляса илнĕ 120 тенкĕ укçана та Румянцева хăй илнĕ.

Шупашкар хулинчи III-мĕш участкори халăх сучĕ çак ĕçе апрелĕн 28-мĕшĕнче пăхса тухса, Румянцевăна икĕ çуллăха тĕрмене хупмалла турĕ.

**М. ДАНИЛОВ.**

## Пĕлтерни

Паян, майăн 5-мĕшĕнче, Советсен Çурчĕн залĕнче, каçхине 8 сехетре Пичет кунĕ ячĕпе парти, совет, комсомол тата профсоюз активĕн пухăвĕ пулать.

**КУН ЙĔРКИ:**

1. «Красная Чувашия» тата «Чăваш Коммуни» хаçатсен редакцийĕсен ĕçĕ çинчен. Докладчиксем — Вишняков тата Яковлев юлташсем.

Пухăва кĕмелли пропуксене ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче илмелле.

**ВКП(б) горкомĕ.**

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**


# РСФСР НАРКОМЛЕСĔН
## СĔНТĔРВĂРРИНЧИ ДРЕВТЕХНИКУМĔ

**1941—42-мĕш вĕренӳ çулĕнче вĕренме çак отделенисене студентсем илесси çинчен пĕлтерет:**

лесопильнăй, тара тата обозостроени производствин специальноçĕсем тăрăх столярно-мебельнăй отделенипе деревообработка отделенине илеççĕ.

***ВĔРЕНӲ СРОКĔ — 3 ÇУЛ.***

15 çултан пуçласа 35 çула çитнисене—арçынсене те, хĕрарăмсене те — илеççĕ.

Техникум йывăçа механически обработка тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен технолог-механиксене вĕрентсе хатĕрлет.

Вĕренсе тухнисене ССР Союзĕнчи крайсене, облаççене тата автономлă республикăсене ĕçлеме яраççĕ.

Вĕренме кĕрекенсем вырăс чĕлхи, литература, математика, СССР Конституцийĕ тата физика тăрăх туллимар вăтам шкул курсĕшĕн испытани тытаççĕ.

Туллимар вăтам шкулсемпе профтехшкулсенчен отлично вĕренсе тухнисене, çавăн пекех вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчи вĕренсе тухнисене испытанисĕрех йышăнаççĕ.

II-мĕш курса, урăх техникумсенчен куçса килес йĕркепе, пĕрремĕш курсран вĕренсе тухни çинчен документ тăратакансене, çавăн пекех тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă, техникумăн 1-мĕш курсĕнче икĕ уйăх хушшинче вĕреннĕ специальнăй дисциплинăсем тăрăх испытанисем панисене илеççĕ.

Отличниксене, çавăн пекех тата приемнăй испытанисенче пĕтĕм оценкăсенчен виçĕ пайĕнчен икĕ пайне отличнăй оценкăсем илнисене стипенди параççĕ. Стипенди пысăкĕшĕ—60 тенкĕрен пуçласа 200 тенке çити.

Техникумăн общежити, столовăй пур.

Заявленисене мĕн чухлĕ вĕренни, миçе çула çитни çинчен, сывлăх çинчен калакан документсемпе, автобиографипе, виçĕ фотокарточкăпа тата 60 пуслăх почта маркисемпе пĕрле çак адреспа ямалла: г. Марпосад (на Волге) Чувашской АССР, Майская улица, дом № 30, древтехникум.

Испытанисем августăн 15-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

2—1



# *ПОСЕВЫ СЕЛЬХОЗКУЛЬТУР*

**в колхозах и у единоличников (а в колхозах питомники и урожаи садов и ягодников)**

# *ЗАСТРАХОВАНЫ*

**по обязательному окладному страхованию от:**

**а) градобития, ливней, бурь и огня на корню;**

**б) вымочек, вымерзания, выпревания, заморозков и наводнения;**

**в) посевы махорки и хмеля, кроме указанных бедствий, от засухи.**

При гибели или повреждении сельхозкультур от указанных стихийных бедствий, колхозы обязаны в пятидневный срок после выявления гибели непосредственно заявить в районную страховую инспекцию, а единоличники — через сельский совет.

При несвоевременной заявке о гибели или повреждении посевов, Госстрах имеет право отказать в выдаче страхового возмещения. За бланками заявлений о стихийных бедствиях сельхозкультур колхозы должны обращаться в Райстрахинспекции.

**Чувашгосстрах.**

4—2


# *Европăри тата Африкăри вăрçă*

**(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)**

Вăтаçĕр тинĕсĕн бассейнĕнче вăрçă ĕçĕсем ытларах та ытларах хаярланса пыраççĕ.

ГРЕЦИРЕ, тесе пĕлтернĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германи чаçĕсем Пелопоннеса оккупацилесе пĕтернĕ. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, апрелĕн 30-мĕшĕнче Италин сывлăш-çар вăйĕсем Грецин Кефаллинипе Закин утравĕсене туртса илнĕ, майăн 1-мĕшĕнче Албанирен килсе çитнĕ пехота чаçĕсем Лефкас утравне туртса илнĕ.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРА вăрçă ĕçĕсем, халичченхи пекех, Тобрук районĕнче Ливипе Египет чиккинче, Соллум секторĕнче сарăлса пыраççĕ. Тобрук патĕнче уйрăмах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Германипе Итали сводкисенче каланă тăрăх, Германипе Итали войскисем Тобрукри укрепленийĕн позицисене атакăлаççĕ, Германипе Итали авиацийĕ хулапа порт çине бомбăсем пыра-пыра пăрахать. Германи командованийĕ майăн 3-мĕшĕнче каларнă сводкăра çапла каланă: Германин Çурçĕр Африкăра çапăçакан корпусĕн чаçĕсем Тобрукăн укрепленийĕн тăрăхĕ çине шала пырса кĕнĕ, темиçе укрепленине туртса илнĕ. Англин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Германипе Итали пехотин, нумай танксем пулăшнипе, Тобрукăн тулашри оборонăллă районне пырса кĕнĕ. Фронтăн пĕр участокĕнче Тобрука хӳтлекен англичансен пĕр чаçĕ ăнăçлă контратака тунă, Германипе Итали войскисене каялла хăваласа янă. Ассошиэйтед пресс агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Грецирен куçса пынă Британи войскисен пысăк чаçĕсене Англин Тобрука хӳтлекен войскисене пулăшма янă. Британи çар карапĕсем Тобрук сыранне хӳтлесе çӳреççĕ. Италипе Германин сыранри çул çинче пухăнса тăракан войскисем çине орудисенчен переççĕ.

Соллум районĕнче патрульсемпе разведка тăвакан отрядсен ĕçĕсем палăраççĕ. Итали сводкинче каланă тăрăх, Германипе Италин Соллум патĕнчен хĕвелтухăç енче разведка тăвакан отрячĕсем англичансене каялла хăваласа янă. Англи сводкинче каланă тăрăх, Англи патрулĕсем активлă ĕçсем сарса ярса, противнике çухатусем кӳнĕ. Рейтер агентствин пĕлтернĕ тăрăх, Соллум районĕнче Германипе Итали войскисем малалла наступлени туман. Хальхи вăхăтра, тет агентство, нимĕçсем Ливине мĕн май килнĕ таран нумайрах войскăсем илсе пыма тăрăшаççĕ, тесе шутлаççĕ.

Çурçĕр Африкăри фронтра пур çĕрте те çапăçакан енсен авиацийĕсем чылаях пысăк активлăхпа кĕрешнĕ. Германипе Итали сводкинче каланă тăрăх, Германипе Итали самолечĕсем Тобрук çине тата хула тавра вырнаçса тăракан укрепленисем çине пĕр хут çеç мар бомбăсем пырса пăрахнă. Çавăн пекех Соллум секторĕнче англичансен мотомеханизированнăй чаçĕсем çине, пĕр çĕре пухăннă войскăсемпе батарейăсем çине те бомбăсем пăрахнă. Англи командованийĕ каларнă коммюникере каланă тăрăх, Англи самолечĕсем Тобрук районĕнче Италипе Германи войскисен автотранспорчĕ çине, Бенгазири гаваньпе ытти çар объекчĕсем çине, Бенинăри аэродром çине, Германипе Италин пĕр çĕре пухăннă войскисемпе мототранспорчĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи çар карапĕсем Эль-Газала районĕнче (Ливире) Германипе Итали войскисемпе транспорт колоннисем çине ăнăçлăн персе тăнă.

ХЕВЕЛТУХĂÇ АФРИКĂРА ытларах активлă вăрçă ĕçĕсем Амба-Алага секторĕнче (Аддис-Абеба патĕнчен сурçĕр енче)-пулса иртеççĕ. Итали войскисем, тенĕ Итали командованийĕн сводкинче, Амба-Алага районĕнче англичансен атакине сирсе янă. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Англи войскисем Бахр-Дара (Тана кӳллин кăнтăр сыранĕнче) тата Дебуба туртса илнĕ. Кондар районĕнче Англи авиацийĕ итальянецсен позицийĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Çавăн пекех Тандехори аэродром çине, Сифанири çуртйĕрсем çине тата итальянецсен Амба-Алага патĕнчи, Аломата сывăхĕнчи позицийĕсем çине те бомбăсем пырса пăрахнă.

* * *

АНГЛИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ ФРОНТРА юлашки кунсем хушшинче активлă вăрçă ĕçĕсем сарăлса пынă. Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, майăн 1-мĕшĕнче Англин кăнтăр сыранĕнче Германин разведка тăвакан самолечĕсем çар завочĕ çине пырса тапăннă тата Плимут патĕнчен кăнтăр енче суту-илӳ тумалли пĕр пароход путарнă. Германи тинĕс-çар флочĕн инçете перекен артиллерийĕ Дувр портĕнче тăракан суднасем çине пенĕ. Ыран майăн 2-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем Ливерпуль çине татах тепĕр хут фугаслă бомбăсемпе вут чĕртсе яракан бомбăсем пырса пăрахнă. Унтан Германи авиацийĕ Кăнтăр Англипе Кăнтăр-Хĕвеланăç Англири портсем, промышленность сооруженийĕсем тата аэродромсем çине пырса тапăннă. Ыран майăн 3-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем Мерсей юханшывĕн районĕ çине пырса тапăннă. Ливерпульри порт сооруженийĕсенче пысăк пушарсем тухнă. Кунсăр пуçне, Англин кăнтăр сыранĕнче кăнтăр-хĕвелтухăç сыранĕнчи çар объекчĕсем çине пырса тапăннă. Кромер патĕнче Англин суту-илӳ тумалли пароходне пĕтерсе тăкнă.

Ыран майăн 1-мĕш тенĕ чух çĕрле, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи авиацийĕн тĕп вăйĕсем Германи Киль порчĕ çине пырса тапăннă. Кунсăр пуçне, Англи самолечĕсем Берлинри, Гамбургри тата Эмденри çар объекчĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Майăн 1-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсем Германи подводнăй лодкисен Гельдерти (Голландия) базисем çине пырса тапăннă. Зенитнăй артиллери вăйлăн персе тăнă пулсан та, Англи самолечĕсем бомбăсене аялтан вĕçсе пырса пăрахнă. Электростанципе казармăсем çине тата ытти çуртсем çине те бомбăсем тĕлех пырса ӳкнĕ. Германин Гельдерти тата Текселъ утравĕ çинчи войскисем çине пулеметсенчен пырса пенĕ. Бомбардировщиксен ытти отрячĕсем Влаардингинри нефтехранилищĕсем çине тата Голланди çыранĕ çывăхĕнчи тĕрлĕ суднăсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Ыран майăн 2-мĕш тенĕ чух çĕрле çыранри оборона самолечĕсем Брестри (Франция) доксем çине пырса тапăннă. Майăн 2-мĕшĕнче кăнтăрла Англи авиацийĕ Роттердам сывăхĕнче вырнаçса тăракан нефтехранилищĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Ыран майăн 2-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи сывлăш-çар вăйĕсем Çурçĕр Германи çине, вăл шутра Гамбург çине çĕнĕрен пырса тапăннă.

Майăн 2-мĕш. (ТАСС).


РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—3—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 3359.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР Заказ № 227, ф. 6, 88 у84 п. л.